Чебоксарская
И. Б. им. Горького
0

Пĕтĕм тĕнчери пролетарисем, пĕрлешĕр!

1938 ФЕВРАЛЬ 24 КĔÇНЕРНИКУН 45 (4858)-мĕш №

ЧĂВАШ КОММУНĔ

20-мĕш çул тухать ● ПСК(б)П Чăваш Обкомĕпе Тĕпĕçтăвкомĕн хаçачĕ ● Пĕр №-рĕ 10 пус

РЕДАКЦИПЕ КАНТУР АДРЕСĔ: Город Чебоксары, ул. Володарского, 5, Дом Печати

ТЕЛЕФОНСЕМ: Редакторăн 0—67; Ред. заместителĕн 0—88; Редакци секретарĕн 4—40; Дежурнăйăн 6—23

ССР Сойузĕн Оборонă Халăх Комиссарĕн ПРИКАЗĔ

№ 49. 1938 çулхи февралĕн 23-мĕшĕ. Мускав хули

Красноармейцă, командир тата политработник йулташсем! Çирĕм çул ĕлĕкрех большевикла партин тата совет правителствин ирĕкĕпе Октябĕрти Социалисăмлă Аслă Революцине хӳтĕлеме Рабочисемпе Хресченсен Хĕрлĕ Çарне туса хунă.

Етемлĕх историнче пуçласа халăхсене чуралăх мар, ирĕклĕх тата никама пăхăнса тăрасмарлăх кӳрекен, пусмăрпа експлоатаци мар, капиталисăмла чуралăхпа пусмăрлăхран сыхласа хӳтлесе тăракан çар çуралса тухнă.

Граждăн вăрçин хăйар çапăçувĕсенче аталанса пырса, Хĕрлĕ Çар никам çĕнтерейми вăй пулса çирĕпленнĕ.

Пĕтĕм тĕнчери империалиссем вырăс капиталисĕсемпе, çĕрулпучĕсемпе, генералсемпе, меньшевиксемпе, ес-ерсемпе т. ытти контрреволюцилĕ партисемпе, ушкăнсемпе пĕрлешсе, Октябĕрти Социалисăмлă Революци пулсан шăп тепĕр куннех çамрăк Совет Республикĕ çине ывтăнчĕç, ăна тулласа таткаласа пăрахасшăн, совет халăхне чура туса хӳрасшăн, пирĕн Тăван çĕршыва хăйсен колонийĕ туса хурасшăн пулчĕç.

Империалиссем совет çĕрĕ çине хăйсен пур йенчен те хĕçпăшаллантарнă оккупацилĕ çарĕсене йăлсе килчĕç, пирĕн çĕршыв чиккисем çине десантсем антарчĕç, хăйсем йертсе пырса вырăс контрреволюцине пĕр çĕре пĕрлештерчĕç, шургвардейцăсен çарĕсене кирлĕ тумтирсем, тупăсем, самолютсем, танксем тата ытти тĕрлĕ çар хатĕрĕсем парса тăчĕç. Çакă вăл пĕтĕм тĕнчери контрреволюцин хĕçпăшалланнă çарĕсем пирĕн совет çĕршывĕ çине хăрушла пысăккăн тапăнса килни пулнă.

Ленин—Сталин партийĕ йертсе пыракан аслă вырăс рабочи класĕ совет хресченĕсене, хамăр çĕршыври патша тытăмĕ пусмăрласа пурăннă пĕтĕм халăхсене империалиссене хирĕç, çĕрулпучĕсене тата капиталиссене хирĕç пыракан кĕрешӳве çĕклерĕ. Большевиксем совет халăхĕнче ирĕклĕхшĕн, никама пăхăнса тăрас марришĕн кĕрешессин таса вут-çулăмне чĕртсе йачĕç. Пĕтĕм таса та тӳрĕ чĕрелĕ ĕçлĕ халăх—пĕчĕккисенчен пуçласа пысăккисем таранах—Рабочисемпе Хресченсен Хĕрлĕ Çарĕн речĕсене тăчĕ.

Социалисăмлă Тăван çĕршывшăн пынă хăйар çапăçура Рабочисемпе Хресченсен Хĕрлĕ Çарĕ хăйне ĕмĕр тĕксĕмленми мухтавпа витрĕ. Начар хĕçпăшалланнă, кирлĕ чухлĕ вĕренмен, час-часах çаррăн та тумтирсĕр пулнă, анчах хăйĕн революцилĕ чунĕ-чĕрипе, капиталиссемпе çĕрулпучĕсем çĕнĕрен таврăнассине хирĕç хăй татăклăн та çирĕп тăнипе хăватлă вăйлă пулнă Хĕрлĕ Çар пĕтĕм тĕнчери интервентсемпе вырăс шургвардейцисен хисепсĕр нумай çарĕсене ним йулмиччен çĕмĕрсе тăкрĕ. Хамăр тăван çĕршывăн чи лайăх ывăлĕсен нумай-нумай йунне тăкса, епĕр Советсен çĕршывĕн ирĕклĕхне, вăл никама пăхăнса тăрас маррине тăшмансенчен сыхласа хăвартăмăр.

Хĕрлĕ Çарăн çапăçури чаплă мухтавлă паттăр ĕçĕсем ĕçхалахĕн чĕрисенче ĕмĕр-ĕмĕрех пурăнĕç. Граждăн вăрçин геройла çулĕсенчи традицисем çинче, массăсене çĕнтерӳ тума организацилес ĕçри большевикла маçтăрлăхăн традицийĕсем çинче пирĕн çамрăксем воспитани илсе пырĕç. Хăйĕн çарĕ совет çĕршывĕшĕн, Ленин—Сталин ĕçĕшĕн тӳса пынă аслă çапăçусене совет халăхĕ нихăçан та манас çук.

Йулташсем! Хĕрлĕ Çар вăл аслă совет халăхĕн ачи, аслă большевикла парти тунă чаплă ĕç.

Ленин граждăн вăрçин пур фрончĕсемпе те çыхăнса тăнă, Ленин Хĕрлĕ Çар строителствин тата унăн çапăçури ĕçĕсен пур ыйтӳвĕсем çине те тимлĕн, витĕр пăхса тăнă. Вăл бойецсен ретне большевикла çирĕп ирĕк, социалисăмлă Тăван çĕршыв тăшманĕсене çĕнтерес арканми шанчăк кĕртсе тăнă.

Сталин йулташ—Ленинăн шанчăклă ученикĕ, пĕрремĕш помощникĕ, Ленин кăтартувĕсем тăрăх йаланах фронтăн чи хăрушлăхлă участкисене пынă, вăл йаланах тăшмана татăклăн çĕнтерме большевикла хăватлă та çирĕп ирĕке ĕçе йама кирлĕ пулнă вырăнсене кайнă.

Граждăн вăрçин çулĕсенче большевикла парти чаплă комиссарсемпе политработниксен кадрĕсене туса хучĕ, вуншар пин большевикла командирсем пăхса ӳстерчĕ, халăх геройĕсен çуталса тăракан чаплă речĕсене туптаса кăларчĕ.

Рабочисемпе хресченсен ĕмĕрхи тăшманĕсене хирĕç пынă çапăçусенче пиншер бойецсем, командирсем, политработниксем—коммуниссем, комсомолецсем, партире тăманнисем хăйулă паттăрсен вилĕмĕпе вилчĕç. Вĕсене асăнса пайан, хăй çирĕм çул тултарнă кун, Хĕрлĕ Çар, пĕтĕм совет халăхĕпе пĕрле, хăйĕн çапăçулă йалавĕсене тайать.

Совет халăхĕ интервентсене аркатса тăкрĕ, патша генералĕсен Российă капиталисĕсемпе çĕрулпучĕсен çарĕсене çапса салатрĕ, нимĕн хăвармиччен пĕтерсе хучĕ.

Анчах Совет Сойузĕ капиталисăмлă йĕри-тавралăх варринче—йаланах хамăр тăван çĕршыв çине çĕнĕрен хĕçпăшаллă тапăну тăвассипе йунаса тăракан капиталисăмлă йĕри-тавралăх варринче вырнаçса тăрать. Акă мĕншĕн ĕнтĕ большевиксен партийĕ, пирĕн правителствă тата тӳррĕмех Сталин йулташ хăй хамăрăн хĕçпăшаллă вăйсен çапăçу хăватне пур майсемпе те вăйлатса тĕреклĕ[illegible]се пырассишĕн ывăнма пĕлмесĕр тăрăшаççĕ.

Хĕрлĕ Çар—пĕтĕмĕшпех халăхран ӳтленсе çуралнă çар, Хĕрлĕ Çара пĕтĕм халăх йуратать, вĕсем иккĕшĕ моральпе политикă тĕлĕшĕнчен çĕмĕрĕлми пĕрлĕхлĕ пулнипе, Ленин—Сталин партин ĕçне большевикла, вĕçĕ-хĕррисĕр йуратнипе ĕмĕр уйрăлми çыхăнса тăраççĕ. Хĕрлĕ Çар хăйĕн речĕсенче вуншар пинĕн хисеплекен нумай-нумай талантлă командирсемпе политработниксем пăхса ӳстерчĕ, вĕсем пирĕн чаплă бойецсене воспитани паракансем тата йертсе пыракансем пулса тăраççĕ. Вĕсем пурте—командирсем те, политработниксем те, рйадовой бойецсем те, партипе правителствă пĕрремĕш хут чĕнсенех, хăйсен тăван çĕршывне хурçăпа та вут-çулăмпа витсе хӳтлĕç, хăйсен организацилĕхĕн, хăйулăхĕн тата паттăрлăхĕн пĕтĕм вăйне кăтартса парĕç.

Хĕрлĕ Çар техникă тĕлĕшпе калама çук чаплă хĕçпăшалланнă. Анчах техникă хăй тĕллĕн кăна илсен вилĕ йапала. Вăл—суккăр, мĕн тутарнине тăвакан хĕçпăшал. Пĕтĕм ĕçе çын, çав техникăна пур йенчен те лайăх тытса тăма пĕлекен çын татса парать. Акă мĕншĕн ĕнтĕ пирĕн парти, çара хăйĕн чи шанчăклă ывăлĕсене йарса, вĕсенчен ĕçе вĕçне çитийĕх пĕлсе тăма ыйтать, акă мĕншĕн ĕнтĕ совет халăхĕ Рабочисемпе Хресченсен Хĕрлĕ Çарне хăйĕн чи лайăх ывăлĕсене парать, вĕсем хамăрăн аслă Тăван çĕршывăн тивĕçлĕ хуралçисем пулассине пĕлсе тăрать.

Пирĕн Рабочисемпе Хресченсен Хĕрлĕ Çарĕнни пек çирĕп те шанчăклă тыл тĕнчери урăх пĕр çарăн та çук тата пулма та пултараймасть. Социалисăмлă хуçалăх пĕр чарăнса тăмасăр чечеклесе пыни; Аслă Совета суйланă чухне хăйсен сасĕсене партипе Совет Правителствишĕн, аслă Сталиншăн панă 90 мĕлйун суйлавçă; Ленин—Сталин партин политикăлă-мораль тата организацилĕ вăйĕ, пĕтĕм совет çамрăкĕсене хăйсен пурнăçне социалисăмлă Тăван çĕршывшăн пама хатĕр тăма вĕрентсе ӳстерекен нумай мĕлйунлă Ленинла комсомол—акă вăл пирĕн Рабочисемпе Хресченсен Хĕрлĕ Çарĕн çĕмĕрлми никĕсĕ, чан-чăн халăх тылĕ.

Хĕрлĕ Çар — пĕртен-пĕр халăх çарĕ, никам çĕнтерейми çар, унăн хăвачĕ çĕршыври Сталинла тĕрĕс политикăран, çар Совет Сойузĕнчи пĕтĕм ĕççыннисемпе ӳтрен-йунран çыхăнса тăнинчен тухса тăрать. Троцкисла - бухаринла фашисла шпионсем, диверсантсем, сăтăрçăсем Хĕрлĕ Çар хăватне çĕмĕрме хăтланса пăхни вĕсемшĕн—тăван çĕршыва пăрахса тăшман йенне куçакансемшĕн—пит хакла ларчĕ—вĕсене пĕтерсе хунă, çĕр пичĕ çинчен шăлса ывăтнă. Хĕрлĕ Çар совет разведкипе мухтанать, вăл разведкă тăшмана, тăшман кирек ăçта пытанса ларсан та, вăл кирек мĕнле маскă тăхăнса витĕнсен те, тĕл персе лектерет.

Хĕвелтухăçĕпе Хĕвеланăçĕнче вăрçă çулăмĕ йавăнать те ĕнтĕ. Фашисла интервентсем пĕтĕм тĕнчене пур вăйсăр халăхсемшĕн те сывхарса килекен ыранхи куна кăтартса параççĕ. Испанипе Китай хăйсене ирĕксĕр туртса кĕнĕ вăрçă вутĕнче çунаççĕ. Империалиссем çынсене вĕлермели çĕнĕ тĕнче вăрçи хатĕрлеççĕ. Вĕсем Совет Сойузĕ çине вăрçăпа тапăнма хатĕрленеççĕ.

Пирĕн нихăçан улшăнми политикă вăл—мирлĕ, лăпкă пурнăç политики. Совет халăхĕ вăрçă йавăрлăхĕсенчен хăтăлни 16 çул ытла ĕнтĕ. Ăна епĕр совет правителствин мирлĕ политики çирĕп пулнипе, Рабочисемпе Хресченсен Хĕрлĕ Çарĕ хăватлă пулнипе туса çитертĕмĕр. Тăшман хамăра çапнине хирĕç вилем кӳмеле таврса çапмашкăн пирĕн çар йаланах хатĕр тăрать.

Хĕрлĕ Çар çирĕм çул тултарнă йатпа Хĕрлĕ Çарăн пĕтĕм личнăй составне сывлăх сунса, красноармейцăсене, командирсене тата политработниксене пурне те Рабочисемпе Хресченсен Хĕрлĕ Çарĕн çапăçу пултарулăхне, политикăлă хăватне малашне те вăйлатса пырас тĕлĕшпе тата ытларах вăй хурса ĕçлеме чĕнетĕп.

Ĕлĕкрех Красногвардейцăсем, хĕрлĕ партизансем пулнисене, запасри командирсемпе политработниксене, красноармейцăсем пулнисене, алла хĕçпăшал тытса совет влаçĕшĕн кĕрешнисене пурне те—красноармейцăла салам!

Сывă пулччăр Аслă Совет Сойузĕн халăхĕсем!

Сывă пултăр Рабочисемпе Хресченсен Правителстви!

Сывă пултăр Рабочисемпе Хресченсен Хĕрлĕ Çарне тата унăн мухтавлă çĕнтерӳвĕсене тăваканĕ, организацилекенĕ—Пĕтĕм Сойузри Коммуниссен (большевиксен) Партийĕ!

Сывă пултăр аслă Сталин!

ССР Сойузĕн Оборонă Халăх Комиссарĕ Совет Сойузĕн Маршалĕ—К. ВОРОШИЛОВ.

Ленинградри государствă консерваторине Ленин орденĕпе наградăланă

ССР Сойузĕн Аслă Совет Президиумĕн 1938 çулхи февралĕн 21-мĕшĕнчи указĕпе Ленинградри Государствă Консерваторине вăл 75 çул тултарнă май тата музыкă кадрĕсене хатĕрлес çĕрте калама çук чаплă тава тивĕçлĕ ĕçсем тунăшăн Ленин орденĕпе наградăланă.

Çавăн пекех Ленин орденĕпе консерватори профессорне, РСФС Республикĕн халăх артистне Иван Васильевич Йершова наградăланă. Ăна ССР Сойузĕн халăх артисĕн йатне памала тунă.

Консерваторин пилĕк работникне Ĕçлĕх Хĕрлĕ Йалавĕ орденĕпе, сакăр çынна „Знак Почета“ орденĕпе тата вунă çынна ССР Сойузĕн Аслă Совечĕн хисеплĕ грамотипе наградăланă. Наградăланисем шутĕнче—консерватори профессорĕсем, доцентсем тата çавăн пекех ытти работниксем те пур.

* * *

Пĕтĕм Российă Ĕçтăвакан Тĕп Комитечĕ 1938 çулхи февралĕн 21-мĕшĕнче йышăннă постановлени тăрăх, Ленинградри Государствă Консерватори 75 çул тултарнă май, консерваторинчи профессорсене, искусствă ĕçĕн тава тивĕçлĕ деятелĕсене Л. В. Николайевпа Б. В. Асафйева РСФС Республикĕн халăх артисĕсен йатне памала тунă. Консерваторинчи ултă профессора искусствăсен тава тивĕçлĕ деятелĕсен йачĕсене тата виçĕ профессора РСФС Республикĕн тава тивĕçлĕ артисĕсен йатне памала тунă.

(ТАСС).

Социалисăмлă державăна хăватлă тинĕспе океан флочĕ кирлĕ

ССР Сойузĕн Тинĕс-Çар Флочĕн Халăх Комиссарĕн ПРИКАЗĔ

ССР Сойузĕн Тинĕс-Çар флочĕн Халăх Комиссарĕ пĕрремĕш рангри çар Комиссарĕ П. Смирнов йулташ февралĕн 23-мĕшĕнче приказ кăларнă, вăл приказра краснофлотец, командир тата политработник йулташсене пĕтĕм халăх праçникĕ йачĕпе—Рабочисемпе Хресченсен мухтавлă та паттăр Хĕрлĕ Çарĕпе Тинĕс-Çар флочĕ 20 çул тултарнă кун йачĕпе сывлăх сунса саламлать.

Рабочисемпе Хресченсен Хĕрлĕ Çарĕпе Хĕрлĕ флочĕ—тесе каланă приказра,—Ленин—Сталин партийĕ йертсе пынипе çак çирĕм çул хушшинче кĕрешӳре çĕнтерӳсен паттăрла çулĕпе утса тухрĕç, хăйсене ĕмĕр тĕксĕмми мухтавпа витрĕç тата вĕсене Совет Сойузĕн халăхĕсемпе пĕтĕм тĕнчери ĕççыннисем тивĕçлипех вĕçĕ-хĕррисĕр йурataççĕ.

Ленинпа Сталин тата вĕсен шанчăклă соратникĕсем йертсе пыни, рабочисемпе хресченсен нихçан арканми çирĕп сойузĕ, совет халăхĕн пĕрлĕхĕ,—çаксем çамрăк Совет республикĕн нумай йышлă тăшманĕсене çĕмĕрсе тăкас кĕрешӳре Рабочисемпе Хресченсен Хĕрлĕ Çарне калама çук пысăк çĕнтерӳсем тума май пачĕç.

Хĕрлĕ Тинĕс-Çар флочĕ,—тесе каланă малала приказра,—троцкисла-бухаринла бандăри тăшмансенчен—шпионсенчен, диверсантсенчен, сыхвĕлеренсенчен тасалать. Çĕнĕ çапăçу техникипе хĕçпăшалланнă Хĕрлĕ Тинĕс-Çар флочĕ чаплă политикăла руководителсемпе специалис-командирсен çĕнĕ пултарулă кадрĕсене пăхса ӳстерет, Совет Сойузĕн вĕçĕ-хĕррисĕр анлă чиккисене сыхлас тĕлĕшпе партипе правителствă панă пур заданисене те пурнăçа кĕртме пултаракан никам çĕнтерейми вăй пулса тăрать.

Партипе правителствă ирĕкĕпе, мĕн пур совет халăхĕн ирĕкĕпе Хĕрлĕ Тинĕс-Çар флочĕ хăй ӳсĕмĕн çĕнĕ тапхăрне кĕчĕ. Социалисăмла державăна—ăна тивĕçлĕ тата унăн интересĕсемпе килĕшекен хăватлă тинĕспе океан флочĕ кирлĕ.

Краснофлотец, командир тата политработник йулташсем, пире парти çак хăватлă, çирĕп тинĕс вăйне организацилеме хушрĕ,—тĕнчипе чи лайăх карапсем тумала тата вĕсем валли коммунисăм ĕçне вĕçĕ-хĕррисĕр йуратса туса пыракан морйаксен кадрĕсене — командирсемпе краснофлотецсене вĕрентсе ӳстермеле.

Çак хисеплĕ те ответлă задачăна пирĕн часлăн пурнăçа кĕртмеле тата аслă совет халăхĕ пирĕн çине хунă шанăçа пĕтĕмĕшпех тӳрре кăлармала.

Тинĕс-Çар флочĕшĕн, унăн кадрĕсемшĕн парти тата Сталин йулташ хăй тăрăшни,—тесе кăтартса панă приказра,—пире хавхалантарать тата хăватлă Тинĕс-Çарпа Океан флочĕ тăвас задачăна пурнăçа кĕртессине пĕтĕмĕшпех шантарса тăрать.

Фашисла агрессорсем,—тесе кăтартнă приказра йулашкинчен,—Совет Сойузĕ çине тапăнма вăйлăн хатĕрленеççĕ, усăлăнах провокацисем туртса кăлараççĕ, пирĕн тылсене шпионсем, диверсантсем йараççĕ. Çакă ĕнтĕ пире социалисăм çĕршывĕн тинĕс хĕррисене никам пырса кĕрейми оборонăна çирĕплетес тĕлĕшпе хамăрăн вăйсене вунă хут ӳстерме хушать.

„Епĕр мирпĕн тăратпăр тата мирлĕх ĕçĕшĕн тăрăшатпăр. Анчах епĕр пире йунаниччен хăрамастпăр, вăрçă чĕртсе йаракансем çапни çине хамăр та çапса ответлеме хатĕр“. Аслă Сталинăн çак сăмахĕсем пирĕн государствă политикине палăртса параççĕ тата Совет Сойузĕнчи халăхăн туйăмĕпе шухăшĕсене кăтартса параççĕ.

Палланах революцилĕ сыхлăхлă пулни, пирĕн флотăн карапĕсемпе чăсĕсем çапăçува йаланах хатĕр тăни пирĕн Совет Сойузĕн тинĕс чиккисем çине никам пырса тĕкĕнес суккине чи лайăх гаранти пулса тăрать.

Сывă пултăр Рабочисемпе Хресченсен никам çĕнтерейми Хĕрлĕ Çарĕ!

Сывă пултăр Аслă Социалисăмлă державăн хăватлă тинĕспе океан флочĕ!

Хĕрлĕ Çарпа Тинĕс-Çар флочĕн çулпуçĕ тата организаторĕ, ПСК(б)П сывă пултăр!

Пирĕн йуратнă çулпуç тата учител Сталин йулташ сывă пултăр!

Мускав Совечĕн чаплă ларувĕ

Мускав, февралĕн 22-мĕшĕ. Пайан каçхине Пысăк театрта Рабочисемпе Хресченсен Хĕрлĕ Çарĕпе Тинĕс-Çар флочĕ 20 çул тултарнă йатпа Мускав Совечĕн чаплă ларувĕ пулса иртрĕ, вăл ларура общесвтăлă организацисемпе çар часĕсем пулчĕç.

18 сехет те 30 минутра театр сцени çине Сталин, Молотов, Ворошилов, Калинин, Микойан, Андрейев, Чубарь, Косиор, Йежов, Ейхе, Димитров, Булганин, Угаров, Буденный, П. Смирнов, Шверник, Мехлис, Косарев, Фриновский, Шкирйатов, Сидоров т. ыт. йулташсем кĕреççĕ. Ларува пухăннисем Сталин йулташа тата партипе правителствă руководителĕсене хавхаланулă оваципе кĕтсе илеççĕ. Пур йенчен те: Сывă пултăр Сталин йулташ! Сталина—„урра“! Сывă пултăр совет правителствин пуçлăхĕ Молотов йулташ! Сывă пултăр Совет Сойузĕн пĕрремĕш маршалĕ Ворошилов йулташ!—тесе кăшкăрнисем йанраса тăраççĕ.

Чаплă ларува Мускав Совечĕн председателĕ Сидоров йулташ уçать. Вăл Рабочисемпе Хресченсен мухтавлă та паттăр Хĕрлĕ Çарĕпе Хĕрлĕ флотне саламлать.

Ларури çынсем Хĕрлĕ Çара саламласа тăвăллăн алă çупаççĕ, Хĕрлĕ Çарăн паттăр та хăйулă ывăлĕсене, унăн талантлă полководцĕсене, Совет Сойузĕн пĕрремĕш маршалне, Оборонă Халăх Комиссарне Клим Ворошилова Совет халăхĕ тарăннăн йуратнине кăтартса параççĕ.

Хисеплĕ президиума Сталин, Молотов, Каганович, Ворошилов, Калинин, Микойан, Андрейев, Чубарь, Косиор, Жданов, Йежов, Ейхе, Петровский, Хрущчев, Булганин, Димитров, Тельман, Хозе Диас йулташсене суйлаççĕ.

Унтан Совет Сойузĕн Оборонă Халăх Комиссарне К. Е. Ворошилов йулташа сăмах параççĕ. Ворошилов йулташ трибунă çине тухсан, ăна тăвăллăн оваци туса кĕтсе илеççĕ. Оборонăн хурçă пек çирĕп Халăх Комиссарĕ, граждăн вăрçин йуратнă геройĕ, Ленинпа Сталинăн кĕрешӳре тĕрĕсленнĕ соратникĕ Хĕрлĕ Çар пурăнса иртернĕ мухтавлă 20 çулăн итогĕсем çинчен, вăл шургвардейцăсен хисепсĕр нумай бандисемпе интервентсене хирĕç кĕрешсе тунă çĕнтерӳсем çинчен калать. Мухтавлă Халăх Комиссарĕ социалисăмла аслă державăн никам çĕмĕрейми хăвачĕ çинчен, унăн хамăр чиккĕсем çине тапăнма хăйакан кирек-мĕнле тăшмансене те çапса салатма пултаракан хĕçпăшаллă вăйĕсен тĕреклĕ хăвачĕ çинче каланă сăмахĕсене залри халăх саванса итлет.

Доклад пĕтет. Мускаври „Çурлапа Мăлатук“ заводри хурçă шăратакан стахановец Черепанов йулташ, Мытищи районĕнчи Калинин йачĕпе тăракан колхоз председателĕ Балакина йулташ, ăслăлăхсен Пĕтĕм Сойузри Академин президенчĕ академик Комаров йулташ Мускаври тата Мускав облаçĕнчи ĕççыннисен йачĕпе Совет Сойузĕн чиккисен хуралĕнче никам çĕмĕрейми çтена пек тăракан паттăр Хĕрлĕ Çара, Рабочисемпе Хресченсен Хĕрлĕ Çарĕпе Тинĕс-Çар флочĕн кĕрешӳлĕ хăватне çирĕплетес тĕлĕшпе ывăнма пĕлмесĕр тăрăшакана, халăхсен аслă çулпуçне аслă Сталина хĕрӳлĕ салам калаççĕ.

Чаплă лару хыççăн пысăк концерт пулнă.

(ТАСС).

—o—o—

Шупашкарти митинг

Шупашкар хулинчи ĕççыннисен Хĕрлĕ Çарпа Тинĕс-Çар флочĕ 20 çул тултарнине уйавлама февралĕн 22-мĕшĕнчех тытăнчĕç. Каçхине фабрик-заводсенче, ертелсенче, шкулсенче, учреждениссенче чаплă ларусем пулса иртрĕç.

Февралĕн 23-мĕшĕнче 4 сехетре Хĕрлĕ площчĕдре хулари ĕççыннисен митингĕ пулса иртрĕ.

Митингра ПСК(б) Парти Обком секретарĕ Павлов, Чăваш республикинчи Осоавиахим Совечĕн председателĕ Осипов, шеф полкĕнчен килнĕ командир Собачников йулташсем тухса каларĕç.

— Йулташсем,—терĕ Собачников йулташ,—Рабочисемпе Хресченсен Хĕрлĕ Çарĕ тата Тинĕс-Çар флочĕ телейлĕ Совет çĕршывĕн шанчăклă хуралĕ пулса тăрать. Пирĕн Хĕрлĕ Çар никам та, нихăçан та тата нимĕнле вăйпа та çĕнтерейми чаплă вăй. Епĕр, бойецсем, командирсем, политработниксем, хамăрăн çĕршыва сыхлама кирек хăçан та хатĕр. (Алă çупаççĕ).

Митинг тăвăллăн алă çупнипе Хĕрлĕ Çарпа Тинĕс-Çар флотне саламласа резолюци йышăнчĕ.

Рабочисемпе Хресченсен Хĕрлĕ Çарĕпе Тинĕс-Çар флочĕн командлă, политикăлă тата начальствă составне „ХХ лет Рабоче-Крестьянской Красной Армии“ йатлă йубилейлă медальпе наградăлани çинчен

Февралĕн 22-мĕшĕнче ССР Сойузĕн Аслă Совет Президиумĕ Рабочисемпе Хресченсен Хĕрлĕ Çарĕпе Тинĕс-Çар флочĕ çирĕм çул тултарнă йатпа Рабочисемпе Хресченсен Хĕрлĕ Çарĕпе Тинĕс-Çар флочĕн командлă, политикăлă тата начальствă составне 25.259 çынна „ХХ лет Рабоче-Крестьянской Красной Армии“ йатлă йубилейлă медаль парса наградăланă.

Наградăланă çынсен спискине „ССРС Аслă Совечĕн Ведамăçĕсенче“ тата „ССРС Ĕççынни Депутачĕсен совечĕсен Известийĕсенче“ пичетлесе кăлараççĕ. (ТАСС).

Хĕрлĕ Çарпа Хĕрлĕ Флота мухтав

Пирĕн çĕршывра кашни рабочи, кашни колхозник, кашни интеллигент, тăван çĕршыв ыйтать пулсан, Хĕрлĕ Çар ретне тăрать. Хĕрлĕ Çарпа Флот резерви—Совет Сойузĕн мĕлйуншар ĕççыннисем. Вăл никам сирсе пăрахайми хăватлă вăй.

Хĕрлĕ Çарпа Тинĕс-Çар флочĕ 20 çул тултарни—Совет çĕршывĕнчи пусмăрлăхпа експлоатацирен ирĕке тухнă халăхсен аслă праçникĕ.

Çурçĕр полюсĕнчен Памир таран граждăн вăрçи çапăçувĕсенче çĕклесе тухнă хĕрлĕ йалав мăнкăмăллăн вĕлкĕшет, вăл йалавăн çути нихăçан та тĕксĕмленес çук.

Революци вутĕнче Сталинпа Ворошилов туптаса çирĕплетнĕ Хĕрлĕ Çарпа Тинĕс-Çар флотне мухтав.

Папанин, Кренкел, Ширшов, Федоров.

„Йермак“ борчĕ, февралĕн 22-мĕшĕ. (ТАСС).

Хĕрлĕ Çар йубилейне чыслани

Февралĕн 22-мĕшĕнче Чăваш Пединститутĕнче Рабочисемпе Хресченсен Хĕрлĕ Çарĕ тата Тинĕс Çар Флочĕ 20 çул тултарнă йатпа чаплă лару пулса иртрĕ. Ларура 800 çынна йахăн пулчĕç.

Чаплă ларура институт военрукĕ Соколов йулташ Рабочисемпе Хресченсен Хĕрлĕ Çарĕ ХХ çул тултарни çинчен доклад турĕ.

Доклад хыççăн, Пединститутри Осоавиахим организацийĕ оборонă ĕçĕнчи 16 активлă студента Хĕрлĕ Çар ХХ çул тултарнă чаплă йубилей йачĕпе хаклă парнесем пачĕ. Николайев, Огнев, Тимофейев, Михайлов, М. Орлов йулташсене 50-шар тенкĕ укçан, Миронов, Искрицкайа, Йегорова, Михайлова, Антонов, Тулайев, Федорова, Викторова, Матвейева, Васильев тата Семенова йулташсене Ленин—Сталин кĕнекисемпе парнелерĕç.

Кун хыççăн институтри физкультурăпа спорт организацийĕ 94 студента Ворошиловла тĕл перекенсен значокне, 14 студента ГСО значокне, 13 çынна ГТО значокне пачĕ.

Йулашкинчен студентсем сцена çине тухса хăйсен пултарулăхĕсене кăтартрĕç. Чи малтанах физкультурниксен выступленийĕ пулчĕ. Вĕсем тĕрлĕрен пирамидăсем туса кăтартрĕç. Çавăн пекех студентсенчен организациленĕ хĕлăхлĕ оркестр М. Манушин йулташ йертсе пынипе авиаци маршĕ, „Песня о родине“ тата „Искатели счастья“ кинофильмран илнĕ „Рыбацкая песня“ йурăсене пысăк çĕкленӳпе выляса кăтартрĕ.

Арк. Нестеров.

Республикăри сђота тивĕçлипе кĕтсе илессишĕн

Çĕнйал-Упири (Трак районĕ) Чапайев йачĕпе тăракан колхоз иртнĕ çулта вăйлă тырпул туса илнипе лăпланса лармасть. Колхозниксем 1938 çулта татах та вăйлă тырпул—гектартан 150 пăтран кайа мар туса илессишĕн кĕрешеççĕ.

Вĕсем Краснодар крайĕнчи Шчербиновски районĕнчи колхозниксемпе колхозниксем çуракине хатĕрленес тĕлĕшпе чĕнсе каланине тата колхозăн çулталăкри отчотне сÿтсе-йавнă хыççăн тата хастарлăн ĕçлеме тытăнчĕç.

Колхоз çĕре çемçетмелли ырăпăти йапаласене плантан ытлашшипех тултарнă. Акмалли вăрлăха икĕ хут суртласа тасатнă.

Колхозниксен ĕçлес хастарлăхĕ пысăк. Вĕсем сђотра пулма тивĕç илессишĕн кĕрешеççĕ. Анчах колхоз правленийĕ ĕçе кирлĕ пек йĕркелесе йамасть-ха.

ПСÇЛКС Трак райкомĕн комсомолецсенчен организациленĕ çăмăл кавалерийĕ Чапайĕв йачĕпе тăракан колхозра пысăк çитменлĕхсене палăртса хăварнă.

Йалхуçалăх машинисене, лаша кÿлмелли таврашсене йусаса пĕтермен. Лашасене çуракине мăнтăр каларассишĕн тăрашмаççĕ, çунасем çителĕклĕ мар пирки тата лашасене йĕркеллĕ çирĕплетсе паман пирки, кам хăшне кÿлет тет çавна кÿлет. Çапла хăтланнипе вăйлă лашасемех начарланса çитнĕ. Колхозниксене çураки вăхăтĕнче ĕçлеме уйрăм ĕçсем çумне çирĕплетмен.

Чапайĕв йачĕпе тăракан колхозри бригадирсемпе стахановецсем çапла калаççĕ: „Пирĕн колхозран йалхуçалăхĕнче малта пыракан республикăри сђотне кайма тивĕçлĕх пулнисем пур. Анчах, çуракине хатĕрленес ĕçре правленийĕ ĕçлекенсем ĕçе тивĕçлипе организацилеменнипе тивĕçрен тухма пултаратпăр“.

Ку сăмахсем тĕрĕс те ĕнтĕ. Кунта социалисăмла ăмăртăва анлăн сарса йарса çитменлĕхсене пĕтерессишĕн тăрашмала. Колхоз правленийĕн хăйĕн тимсĕрлĕхне пĕтерсе, колхозниксен ĕçлес хастарлăхне тивĕçлĕ çулпа илсе пымала.

Районри çĕрĕç пайĕн кайа йулса пыракан колхозсене пулăшса пымала. Йалхуçалăхĕнче малта пыраканĕсен республикăри сђотĕнче пулассишĕн кĕрешсе ĕçе хастарлăн тытăнмала.

А. С. Сымокин.

Йĕлчĕк районĕн кайа йулса пыма нимĕнле сăлтав та çук

Йĕлчĕк районĕ иртнĕ çулта вăтам шутпа гектартан 20 центнера йахăн тĕштырă илнĕ. Уйрăм колхозсем: çĕнĕ Ишчерекри „КИМ“ тата ыттисем 24—25-шер центнер илнĕ. Районăн, паллăх, кăçал татах вăйлă тухăçлăхшăн кĕрешмеле. Анчах та, районри колхозсенче вăйлă тырпулшăн кĕрешес ĕçе кирлĕ пек организацилесе йани çук. 10 колхозра пайан кунччен авăн çапса пĕтермен. „Малала“ колхозра иртнĕ çулта пуçтарса илнĕ тырăран 60 процент çапмасăр йулнă. Çавăн пекех „Коминтерн“ колхозра та çапмалли тырă нумай. Çавăн пирки район тупăшсене валеçес тĕлĕшпе те пит кайа йулнă. Колхозсенчен 50 процентĕ 1937 çулхи тырпулсене валеçсе пĕтермен. Валеçмелли ведăмăçсене 28 колхозра çеç çирĕплетнĕ. Чылай колхозсенче лайăх ĕçленĕ бригадăсене ертел уставĕ тăрăх ĕçкунĕсене ÿстерсе пымалли çинчен манса хăварнă.

Çаксем ĕнтĕ пурте районри çĕрĕç органĕсем—çĕрĕç пайĕпе МТС руководителĕсем колхозсене 1937 хуçалăх çулне вĕçлесе çитерес тĕлĕшпе йертсе пыманнине пĕлтереççĕ. Хуçалăх çулне вĕçлес ĕçе вăрăма йани 1938 çулхи тырпулшăн кĕрешес ĕçре, çуракине хатĕрленес ĕçре пит пысăк чăрмав пулса тăрать.

Çĕре çемçетмелисене хатĕрлес ĕçе илсен, районри ĕç çапла тăрать: тислĕк пухмалли плана 40 процент, кайăк-кĕшĕк тислĕкĕ хатĕрлессине 13 процент тултарнă. Торф каларас ĕçе колхозсем тытăнман та. Минераллă çăнăхсене планпа пăхнинчен 30 процент çеç кÿрсе килнĕ. Çĕре çемçетмелисене хатĕрлес тĕлĕшпе Аслă Йĕлчĕкри Ленин йачĕпе тăракан колхоз çеç плана ытлашшипе тултарнă.

Район Патăрйел районĕпе социалисăмла ăмăртса ĕçлет. Ăмăрту договорне йанварĕн 27-мĕшĕнче тунă. Анчах та ăмăртува районри работниксем урăхла ăнланаççĕ. Район хăйĕн çине мĕнле обйазателствă илни çинчен колхозсем пĕлмеççĕ; ун çинчен пĕр колхозра та сÿтсе-йавман. Çавăн пекех Шчербиновцăсем чĕнсе каланине те нихăш колхозра та сÿтсе-йавман.

Районри организацисем, районри çĕрĕç органĕсен руководителĕсем колхозсене вăйлă тырпулшăн кĕрешес ĕçе мобилизацилеменнине, çав ĕçре конкретлă йертсе пыманнине кăтартакан тепĕр факт вăл—колхозсенче, бригадăсенче тата звеносенче агротехникăла ĕçсен планĕсене туманни. „Трактор“, „Малала“, „Смычка“, „Çĕнĕ çул“, „Коммунист“ колхозсенче нихăш бригадăра та агротехникăла ĕçсен планĕсене колхозниксем хушшинче сÿтсе-йавман.

Çĕрĕç пайĕпе МТС колхозсенчи йалхуçалăх машинисене йусас ĕçе йĕркелемен çеç те мар, МТС тракторĕсене йусас ĕçпе те кайа йулнă. ЧТЗ тракторĕсене йусама запаслă пайсене хаљ те кÿрсе çитереймен.

Районра вăрлăх хатĕрлес ĕç те пит кайа йулса пырать. Ун çинчен темиçе хут та çырнă. Анчах татăклă улшăну хаљ те çук. Суртлă вăрлăхсене улăштарас ĕçе, вăрлăхсене суртласа анализ тăвас ĕçе районăн уйрăмăнах хăвăртлатма тăрăшмала.

Çавăн пекех колхозниксене агротехникăна вĕрентес ĕçе те йĕркелесе йама кирлĕ. Районра пурĕ 36 агрокружок шутланать. Тĕрĕссипе илсен вĕсенчен пĕр кружокĕнче те йĕркеллĕ вĕрентни çук. Заочнă йĕркепе вĕрентес ĕçе те хакламаççĕ. Воробйов йулташ, çĕрĕç пай пуçлăхĕ, заочнă йĕркепе вĕрентес йенĕпе районри организатор шутланать. Анчах вăл çав ĕç йенĕпе нимĕн те тумасть. Заочниксем патне йанă кĕнекесене колхозсене çитермен. Çĕрĕç халăх комиссариатĕнчен йанă хими лабораторийĕ сарайра йур айĕнчех пăсăлса выртать.

Февралĕн 28-мĕшĕнче йалхуçалăхĕнче малта пыракансен республикăри сђочĕ уçăлать. Сђотра пулма тивĕç паракан условисем çинчен пурте пĕлеççĕ. Хаљ пĕтĕм республикă çав сђота хатĕрленет. Сђот уçăлнă тĕле çуракине хатĕрленес тĕлĕшпе кайа йулнă ĕçсене пурне те вĕçлесе çитермеле.

Ф. Архипов.

Колхозсенче çулталăк отчотĕсене тăвасси тата 1937 çулхи тырпулсемпе тупăшсене валеçес ĕç 1938 çулхи февралĕн 20-мĕшне мĕнле пынине кăтартакан Чăваш Çĕрĕç халăх комиссариачĕн

СВОДКИ

РАЙОНСЕМ	Районĕпе пурĕ колхозсем	Вĕсенчен çулталăк отчотне тунисем	Çулталăк отчотне тунисем процентпа	Çулталăк отчотĕсене çĕрĕç пайĕсенче тата МТС-сенче тĕрĕслесе тухса йышăнни	Тĕрĕслесе йышăнни процентпа	Колхозсем: Валеçмелли ведомоçсене йышăннисен хисепĕ	Колхозсем: Ĕçкунĕсем тăрăх пĕтĕмпех валеçсе пĕтернĕ.
Улатăр	26	25	96,2	21	80.8	25	—
Елĕк	127	112	88,2	37	29,1	124	115
Патăрйел	49	14	28,6	14	28,6	20	5
Вăрнар	85	85	100	83	97,6	86	83
Йĕпреç	66	66	100	51	77,3	66	51
Ишлей	111	86	77,5	60	54,1	110	110
Канаш	47	41	87,2	26	55,3	32	27
Куславкка	65	40	61,5	15	23,1	40	—
Хĕрлĕ Чутай	60	50	83,3	28	46,7	60	60
Кувакино	16	16	100	16	100	16	—
Йĕлчĕк	52	33	63,5	23	44,2	38	13
Сĕнтĕрвăрри	96	66	68,8	45	46,9	94	70
Пăрачкав	42	39	92,9	30	71,4	39	37
Турхан	43	23	53,5	12	27,4	38	31
Тутаркас	128	116	90,6	87	68,0	128	128
Трак	100	90	90,0	40	40	100	—
Вăрмар	67	40	59,7	35	52,2	40	—
Çĕрпÿ	117	117	100	73	62,4	110	106
Шупашкар	113	85	75,2	42	37,2	85	—
Шăмăршă	30	19	63,3	9	30,0	20	—
Шăхасан	67	59	88,1	32	47,8	65	—
Шăнкăртам	21	20	95,2	16	76,2	20	16
Çĕмĕрле	42	37	88,1	9	21,4	42	39
Иетĕрне	90	57	63,3	45	51,1	90	80
Тăвай	33	29	87,9	28	84,8	29	28
ЧАССР тăрăх	1687	1365	80,9	876	52,0	1516	1008

Республикăри колхозсем тăрăх

** Ишлей районĕнчи çĕрĕç пайĕ çуракине хатĕрленес ĕçре хаљ те оперативлă йертсе пыма тытăнман. Кăшавăшри Карл Маркс йачĕпе тăракан колхоз пек колхозсен пахаĕç опычĕсене йулса пыракан колхозсене куçармаççĕ.

Çакна пула ĕнтĕ хăшпĕр колхозсем çуракине хатĕрленес тĕлĕшпе пит те йапăх ĕçлеççĕ. Сăмахран, Чăканарти „Тĕрĕс çул“ колхозра пайана çитсе те вăрлăхсене суртлама тытăнман. Колхозăн 20,2 центнер урпа вăрлăхĕ улăштармала, ăна халĕ те улăштарса килмен, 4 центнер клевĕр вăрлăхĕ çитмест тата ытти те.

Çĕре çемçетмелисем колхозра темĕн чухлех. Апла пулин те çаксене хатĕрлессишĕн кĕрешни çук. 21 плуг тата икĕ сейалкă йусамала, пĕрне те йусаман-ха.

** Шетмĕпуç йалсоветне кĕрекен „Çалтăр“ колхозра та çуракине тивĕçлипе хатĕрленме тытăнман. Колхозăн çуракине ыраш калчи çине клевĕр акса хăвармала, анчах клевĕр вăррине пĕр килограм та хатĕрлемен.

Çавăн пекех „Чăваш Коммунĕ“, „Автан“ колхозсенче те çуракине лайăх кĕтсе илессишĕн кĕрешсе ĕçлени çук. Ку колхозсенче Краснодар крайĕнчи Шчербиновцăсем чĕнсе каланине та сÿтсе-йавман. Вăйлă тырпул туса илессишĕн пыракан социалисăмлă ăмăрту çителĕксĕр сарăлса пырать.

О Артемйев,
Л Петров.

* * *

** Анат Куканарти (Трак р.) Буденный йачĕпе тăракан колхозри колхозниксем кăçал гектартан 140 пăтран кайа мар тĕштырă туса илессишĕн кĕрешеççĕ. Бригадăсем, звеносем вăйлă тырпул туса илессишĕн пĕр пĕрнипе ăмăртса ĕçлеççĕ.

Халĕ уйрăмăнах çĕре çемçетмелисем хатĕрлессипе ĕç хĕрÿлĕн пырать. Ку тĕлĕшпе стахановла звеносем организациленĕ. Комсомолец И Гордейев бригадинчи звеносем 4 куй хушшинче 3800 лав йушкăн уйа кăларнă. Ку бригадă ытти тĕрлĕ ĕçре çемçетмелисем хатĕрлес ĕçре те малта пырать.

Çуракине хатĕрленес ĕç план тăрăх пулса пырать. Колхозниксем „Свобода“ колхоз членĕсене социалисăмла ăмăртăва чĕннĕ чух, хăйсем çине илнĕ обйазателствăсене республикăра малта пыракан стахановецсемпе ударниксен сђотне кайма тивĕç илессишĕн кĕрешетпĕр, терĕç.

С. Н. Василков.

180 процентран кайа мар

КАНАШ. Йаманкассинчи Доронин йачĕпе тăракан колхоз членĕсем вăрман хатĕрлевĕнчи стахановла уйăхлăхра хастарлăн, пĕрпĕрипе социалисăмла ăмăртса ĕçлеççĕ. Уйрăм колхозниксем: Р. Йегоров, А. Прокопйева, И. Гордейев, Н. Йевдокимов йулташсем кашни кунах нормăна 180 процентран кайа мар тултарса пыраççĕ.

Вăрман ĕçлекенсем хушшинче куљтмассăлă ĕçе те сарса йанă. Кашни кунах вĕсем патне çĕнĕ хаçат-журналсем илсе пыраççĕ. Çак кунсенче колхозниксем РСФСР Аслă Советне суйламалли Положенине вуласа тухрĕç. Çавăнпа пĕрлех Испанири вăрçă хыпарĕсене тата папанинцăсем çинчен пĕр сиктермесĕр вуласа пыраççĕ. Вăрмантах стена хаçачĕ туха тăрать.

Колхоз вăрман хатĕрлев планне срукчен тултарассишĕн Шмидт йачĕпе тăракан колхозпа ăмăртса ĕçлет.

П. Тихонов.

Чи лайăх çынсем ПСК(б) Парти ретне кĕреççĕ

ССР Сойузĕн Аслă Совет суйлавĕ ĕçсыннисен политикăла активлăхне нихăçанхинчен ытла çÿле çĕклерĕ. Ĕçсыннисен çĕнĕ сийĕсем политикăла пурнăçа активлăн хутшăнчĕç. Вĕсем хушшинчен Ленин—Сталин парти ĕçĕшĕн, коммунисăмăн çĕнĕ çĕнтерÿвĕсемшĕн ывăнма пĕлмесĕр кĕрешекен боецсем, болђшевикла агитаторсем, пропагандиссем тата массă организаторĕсем пинĕ-пинĕпе ÿсрĕç. Чи лайăх рабочисем, колхозниксем тата совет интеллигенцийĕ Ленин—Сталин парти ретне туртăнаççĕ, унăн ретĕнче тăрса коммунисăмшăн татах та хăватлăн кĕрешессишĕн ĕмĕтлĕхне тулнă вĕçен кăмăлĕсем.

Кадрсемпе кулленех ĕçлесси, вĕсене болђшевисăмпа хĕçпăшаллантарасси тата Ленин—Сталин парти ретне кĕме хатĕрленме пулăшасси—парти организацийĕсен пысăк задачĕ.

ПСК(б) Партин Вăрнар организацийĕ парти ретне илессипе çĕнĕрен пуçланăранпа кандидата 10 çынна (вĕсенчен 5-шне 1938 çулта) илнĕ, кандидатран ПСК(б)П членне 10 çынна куçарнă. Райком бюровĕнче пăхса тухма 9 зайавлени тăратнă, вĕсенчен 5 зайавленийĕ парти кандидатне илмелисем, 4 зайавлени кандидатран члена куçармалисем.

Социалисăмшăн хăватлă кĕрешÿре пулса çирĕпленнĕ стахановецсем, малта пыракан рабочисем, колхозниксем тата совет интеллигенцийĕ Ленин—Сталин парти ретне кĕреççĕ. Акă комсомолец Жарков йулташ. Вăл орденоносец Коротков йулташпа пĕрле 1928—29 çулсенче Кољцовкара колхоз организацилессишĕн активлă кĕрешнĕ. Колхоз организациленнĕренпе вара парти йертсе пынипе Коротков йулташпа пĕрле колхоза болђшевиклатасшăн, колхозниксене пуйан та културăлă пурнăç туса парасшăн ывăнма пĕлмесĕр ĕçленĕ. Халăх тăшманĕсене хирĕç кĕрешсе вирлĕ çапăçусем витĕр тухнă, йалана Ленин—Сталин парти ĕçĕшĕн пĕр иккĕленмесĕр малала пынă, çирĕпленнĕ. Çавăнпа та Коротков йулташа ЧАССР Тĕпĕçтăвком председателĕн заместителне суйласан колхозниксем хăйсен колхозне йертсе пыма кĕрешÿре çирĕпленнĕ, Коротковăн чи шанчăклă йулташне Жарков йулташа суйланă. Халĕ Жарков йулташ ПСК(б)П кандидатне кĕнĕ.

Пупин Петр йулташ, вăл та Кољцовкăра колхоз организацилессишĕн паттăррăн кĕрешнĕ. Нумай çулсем хушши комсомол организацин секретарĕ пулса ĕçленĕ, колхозра паллă бригадир, пысăк тырпул мăстăрĕ. Халĕ ăна колхоз правленин председателĕн заместителĕ пулма суйланă. ПСК(б)П кандидатне илнĕ.

Мишаков йулташ, стахановец, трактор бригадин бригадирĕ, трактор пуçне 1255-шер гектар сухаланă, обшчествăлă ĕçре активлăн хутшăнса ĕçлет, агитатор, сочувствуйушчисен группинче пулнă, халĕ ăна ПСК(б)П кандидатне илнĕ.

Кољцовкари пуçламĕш организацире, партине илесси çĕнĕрен пуçланнăранпа 2 кандидата члена куçарнă, кандидата 7 çын илнĕ.

Анчах та ПСК(б) Партин Вăрнар организацийĕ вăраххăн ÿсет-ха. Парти ретне ÿстересси, социалисăмла çĕршывăн шанчăклă ывăл-хĕрĕсене, Ленин—Сталин парти ĕçĕшĕн паттăрла кĕрешекен борецсене, партире мар болђшевиксене парти ретне илессине вăйлатасси—кашни парти организацин кулленхи ĕçĕ пулса тăрать. Çакна хайонри пуçламĕш организацисенчен нумайĕшĕ ăнланса илеймен-ха. Вĕсем парти резервипе партире мар болђшевиксемпе, сочувствуйушчисемпе тата комсомол хушшинче питĕ те çителĕксĕр ĕçлеççĕ.

Партин пуçламĕш организацисенче çĕнĕ çынсене парти ретне илме хăраса тăни те палăрать. Фосфорит заводĕнчи партин пуçламĕш организацийĕ партине илессине çĕнĕрен пуçланăранпа вара пĕр çынна та илмен. Парти организацийĕ йертсе пынипе çитĕннĕ стахановецсем заводра темĕн чухлех. Акă, комсомолка Смирнова, вăл заводра 1931 çултанпа ĕçлет, стахановка, хут пĕлмен, халĕ хута вĕреннĕ, хăй тĕллĕн ПСК(б)П историне вĕренет, парти ретне кĕме хатĕрленет. Парти организаци ăна пулăшмасть. Федоров, Максимов, Филиппова т. ыт. комсомолецсем-стахановецсем агитацине пропагандă ĕçĕсенче хăйсен пултарулăхĕсене кăтартнă. 1931 çултанпа парти организаци йертсе пынипе çитĕннĕ, вĕсене парти организаци воспитани панă. Çапах та парторг Йегоров йулташ „çынсем çитмеççĕ, резервă çук“, тесе парти ретне ÿстерес тĕлĕшпе ĕçлеменнине хăй çинчен сирсе пăрахасшăн, хăйне айăплă мар пек кăтартасшăн. „Çынсем çитмеççĕ, резервă çук“ тесе шухăшлани партине хирĕçле шухăш, вăл халăх тăшманĕсене кирлĕ шухăш.

Çавăн пекех Леспромхозри, райĕçтăвкомри, посолкă советĕнчи партин пуçламĕш организацийĕсем ÿсмеççĕ. Унти коммуниссем партине кĕме туртăнакан çынсене пĕлмеççĕ, чи лайăх çынсенчен лайăххисене суйласа илсе партине кĕме хатĕрлес тĕлĕшпе пикенсе ĕçлемеççĕ.

ПСК(б)П Вăрнар организацин вăраххăн ÿснĕшĕн комсомол те айăплă. Ку тарана çитсе те парти ретне кĕме Вăрнар райкомолĕ 23 комсомолеца кăна рекомендаци панă. Райкомол комсомолецсене рекомендаци панă чух çакă пысăк та ответлă ĕç çине çиелтен пăхать, партине кĕме рекомендаци ыйтакан комсомолеца пур йенчен те тĕплĕн тишкерсе тухмасть. Çавна пула ĕнтĕ райкомолăн икĕ комсомолецран хăй панă рекомендацисене кайала илме тивнĕ. 23 çынран 9-шне ПСК(б)П райком бюровĕ парти ретне илнĕ, 6-шне парти пуçламĕш организацисенче пăхса тухса парти ретне илнĕ. Партине кĕме рекомендаци панă комсомолецсене рекомендацисем тупма райкомол çителĕклĕ пулăшу памасть. Шашкин комсомолеца райкомол 1937 çулăн çентабĕр уйăхĕнче партине кĕме рекомендаци панă, ытти рекомендацисене вăл халĕ те тупайман.

Ленин—Сталин парти ретне кĕме туртăнакан партире мар болђшевиксен йышĕ нумай. Вĕсемпе таччăнрах çыхăнса, вĕсене кулленех воспитани парса, лайăх çынсенчен чи лайăххисене ПСК(б) Парти ретне пĕрерĕн суйласа илессине вăйлатмала.

М. Йакимов.

Çитĕннисене хутла вĕрентес ĕç çителĕксĕр пырать

Йулашки вăхăтра çитĕннисене хутла вĕрентес ĕç чылай районсенче йавашланчĕ. Акă Çĕмĕрле районĕнчех вăл ĕç ÿрĕк-сÿрĕккĕн пырать. Хутла пĕлменнисем районĕпе 1500 çынна йахăн шутланаççĕ. Вăл шутран февралĕн 15-мĕшне 500 çынна çеç вĕрентме тытăннă-ха. Ку пачах та çителĕксĕр. Çитĕннисене хутла вĕрентес ĕçпе райĕçтăвком та, райçутĕç пайĕ те, парти райкомĕ те интересленмест.

Пысăк Улгашра хутла пĕлменнисем 250 çын, вĕсене вĕрентессипе йалсоветĕ те, колхоз правлени те ĕçлемест. Йалта 26 учител, вулав сурт, клуб пуçлăхĕсем пур. Актив нумай. Анчах вĕсенчен пĕри те хутла пĕлменнисене вĕрентес ĕçпе ĕçлемеççĕ. Тукасра хутла пĕлменнисем 40 çын, вĕсене вĕрентме райçутĕç пайĕ никама та çирĕплетмен. Йалсовет председателĕ Шорка хутла пĕлменнисене вĕрентес ĕçе организацилессипе ĕçлемест. Йалсовет çумĕнчи куљтсекци те вăл ĕçпе ĕçлемест.

Хутла пĕлменнисене вĕрентес ĕçпе Çĕрпÿ районĕ те йулса пырать. Районĕпе хутла пĕлменнисем 736 çын, вĕсенчен 234 çынне çеç вĕрентме тытăннă. Йĕкĕрварта хутла пĕлменнисем 57 çын. Вĕсене пайан куна çитсе те вĕрентме тытăнман-ха. Йалсоветĕ йалти куљтурăлă вăйпа усă курма пĕлмест.

Хутла пĕлменнисемпе сахал пĕлекенсене вĕрентес ĕçре комсомол организацисен те вирлĕн ĕçлемеле. Çĕмĕрле комсомол райкомĕн секретарĕ вырăнĕнче ĕçлекен Гуçков хутла сахал пĕлекен комсомолецсем çинчен пĕлмест.

Хутла пĕлменнисене вĕрентес ĕç ытти районсенче те йапăх тăрать. РСФСР Аслă Совечĕн суйлавне хатĕрленнĕ май хутла пĕлменнисене пурне те вĕрентес ĕçе пуçламала ĕнтĕ. Паллах, хутла пĕлменнисемпе сахал пĕлекенсене вĕрентес ĕçе çине тăрса ĕçлемесĕр пурнăçлама май çук. Тата çакна та каласа хăвармала. Пур хутла пĕлменнисене те пĕр вичеçепе илсе пăхмала мар. Вĕсен хушшинче саспалли пĕлменнисем те пур. Хăшпĕрисем саспалли пĕлеççĕ, анчах вĕсем вулама, çырма пĕлмеççĕ. Хутла пĕлменнисем хушшинчех тата кăштах вулама, çырма пĕлекеннисем пур. Хутла пĕлменнисене вĕрентме организациленĕ чухне çавсене пурне те шута илмеле. Акă, Çĕмĕрлери „Болђшевик“ заводра хутла пĕлмен Карабашева йулташа хутла сахал пĕлекенсемпе пĕрле лартнă. Паллах, вăл урокра ĕлкĕрсе пырайман. Вĕренме те пăрахать. Завком та хутла пĕлменнисене вĕренес ĕç çине тĕрĕс пăхман. Ăна хутла сахал пĕлекенсемпе пĕрлех вĕренме хушнă. Кунашкал туни тĕрĕс мар.

Хутла пĕлменнисем хушшинче темиçе хут та хутла пĕлменнисен шкулĕнче вĕреннисем пур.

Чылай чухне вĕрентессе те начар вĕрентеççĕ. Ун пек ан пултăр тесен, хутла пĕлменнисен шкулĕнчен вĕрентсе кăларсан, вĕсене малала хутла сахал пĕлекенсен шкулĕсенче вĕрентмеле. Хутла пĕлменнисемпе сахал пĕлекенсене вĕрентес йенĕпе ĕçлекенсене вăхăтра пулăшу, кăтарту памала. Райçутĕç пайĕсем ку ĕç çине çителĕклĕн пăхмаççĕ-ха.

Ф. Романов.

8 çынна вĕрентсе кăларчĕç

Кăшаркассинчи (Çĕрпÿ р-нĕ) тулли мар вăтам шкулти учителсем хутла сахал пĕлекенсене вĕрентессипе тăрăшса ĕçлерĕç. Çак кунсенче çеç вĕсем хутла сахал пĕлекенсен шкулĕнчен 8 çынна вĕрентсе кăларчĕç. Халĕ ĕнтĕ йалта хутла пĕлмен çынсем çук.

А. Иванов.

Карйериссене ответ тыттармала

ПСК(б)П Тĕпкомĕ „Парти организацисен коммуниссене партирен кăларнă чухнехи йăнăшĕсем çинчен, партирен кăларнисен апелљацисем çине формаљнă-бюрократла пăхни çинчен тата çав çитменлĕхсене пĕтермелли майсем çинчен“ йышăннă постановлени Елĕк районĕнчи „Колхоз хаçачĕ“ çинче йанварĕн 28-мĕшĕнче пичетленсе тухрĕ. Унтанпа „Колхоз хаçачĕ“ тата 8 номĕр тухрĕ. Апла пулсан та колхоз хаçачĕ хăй тунă йăнăшĕсене уççăн кăтартса пама вăтанать.

Февралĕн 2-мĕшĕнче „Колхоз хаçачĕ“ „Парти Тĕпкомĕн решенисене пурнăçа болђшевикла кĕртмеле“—тесе умстатйа кăларать; анчах районра мĕнле йăнăшсем туни çинчен пĕр сăмах та уçмасть. Февралĕн 5-мĕшĕнче „ПСК(б)П Тĕпком пленумĕн постановленине тĕплĕн вĕренмеле“ йатлă Дубинин й. çырнă статйа тухать, унта та „комсомол организацинче „клеветниксемпе“ „карйериссене“ вăхăтра тăрă шыв çине кăларса, вĕсемпе çителĕклĕ кĕрешсе пынă“ тенипе иртсе кайать. Февралĕн 10-мĕшĕнче тин „Колхоз хаçачĕ“ „елекçĕ-карйериса комсомол ретĕнчен кăларнă“ тесе пĕр тĕслĕх, прокурор вырăнĕнче ĕçленĕ карйерис Смирнов П. И. çинчен çырса кăларать. Йулашкинчен февралĕн 17-мĕшĕнче кĕскен „Иварбейев йулташа парти ретĕнчех хăварнă“ тесе пĕлтерет. Иварбейев йулташа кăларнă чухне редакци мăнăрах сасăпа каласа кăларса сирпĕтни (Порфирийев, Петрикова Алексейев, тата ыттисем те), райĕçтăвкомра чылайранпа ĕçлекенсене сăлтавсăрах тăшманла елементсем тени (Кољцов, Храброва, Нагорный).

Сынсем çине çăмăлттайла пăхасси, нимĕнле фактăсăрах çын çинчен елек сарасси Елĕк районĕнче чылайах сарăлнă пулнă. Çынсене сăлтавсăрах айăпласси прокурор вырăнĕнче ĕçленĕ Смирнов пуçарса пынă, ăна Герасимовпа Зорин пулăшса пынă. Учителсене „тасатас“ ĕçе Елĕкри вăтам шкулта ĕçлекен Михайлов туса пынă.

Смирнов „планĕпе“ райĕçтăвком председателне Иварбейева йепле те пулсан айăпламала пулнă. Çав шутпа вăл районра ĕçлекен Б. арăмĕ тепĕр хĕре хĕнеме тăнăшăн та Иварбайев айăплă тесе сÿпĕлтетнĕ, райĕçтăвком пленумĕнче: — Иварбейевăн пиччĕшĕ те тăшман, вăл хăй те тăшман,—тесе хĕрелсех пленум членĕсемпе йатласнă (ку ĕçре ăна „Чăваш Коммунĕ“ те пулăшнă. „Райĕçтăвком аппаратĕ таса пулмала“ тесе А. Каховский елеклесе çырнă статйа). Иварбейев хыççăн ПСК(б)П райкомĕн секретарне Меценотова йулташа ĕçрен кăларса айăпламала пулнă, Меценатова çинчен „материал“ хатĕрлесе, „тăшман хутне кĕрекен“ тесе прокуратурăна та, Обкома та материал йанă. Райĕçтăвком президиум членĕсен—Семенов П. йулташпа Никандров йулташ çинчен материал пуçтарнă. ПСÇЛКС райкомĕнче ĕçлекен Кушков, Константинов, Дубинин йулташсем çинчен „материал“ хатĕрленĕ. Моисейевана çителĕксĕр сăлтавпа ĕçрен кăларттарса асаплантарнă.

Çавăн пекех Иварбейев „Халăх тăшманĕсене хÿтĕлесе пынă Иварбейева парти ретĕнчен кăларнă. ...Иварбейевăн сăтăрла ĕçĕсен йулашкийĕсене пĕтĕмпех тăрă шыв çине кăларса çĕмĕрсе пĕтерессишĕн кĕрешме мобилизацилемеле“). Халĕ хăй елекçĕ карйериссем хыççăн кайни çинчен, елекçĕсем мĕн йатлă иккенне шарламасть. Ку ĕнтĕ парти Тĕпкомĕ „парти организацисене парти членĕсем çинчен елек сарса айăпа кĕнĕ çынсене партилĕ ответ тыттарма, партин çак членĕсене йалтах реабилитироват тума, тата парти членĕ çине тивĕççĕр йат ÿкерекен материалсем малтан пичетре пулнă пулсан, хăйсен постановленисене хаçатра пичетлесе кăларма“ хушас тенине ăнланнине пĕлтерет-и? Çук, „Колхоз хаçачĕ“ çакна тĕппипех ăнланман. Çавăнпа вăл Зорин елекле статйа çырни çинчен шарламасть, çавăнпа вăл февралĕн 2-мĕшĕнче тухнă номĕрти умстатйаран, район пулса ĕçлекен Герасимовпа килĕшсе—„октабĕрте халăх судйи Моисейева йулташ çинчен çырни тĕрĕс мар“,—тенĕ абзаца хуратса хума килĕшет, çавăнпа елекçĕсен, карйериссен йатне „Колхоз хаçачĕ“ (редактор Кураљов й.) халăха пĕлтерме иметет.

Елĕк районĕнче пуриншĕн те паллă йăнăшсем çаксем пулнă: партирен тивĕçсĕр, тасаранах, ĕçе лайăх тĕпчемесĕр кăларни (Иварбейев, Волков, Данилов), учителсене айăпсăрах тăшман йатне парса кăларса сирпĕтни.

Герасимов çак прокурорпа тачă çыхăнса çÿлте асăннă йулташсем çинчен „материал“ пухнă, Меценатова йулташăн авторитетне пĕтерес шутпа унăн çинчен киревсĕр сăмах сарнă. Иварбейев йулташа ОАХ членĕнчен кăларттарнă, профсойузран кăларманшăн местком членĕсене „тăшмансене хÿтĕлекенсен“ йатне панă, хватертен кăларасси çинчен ыйту лартнă, Иварбейевăн ачи чирлесен тухтăр ăна килсе пырса пулăшу панăшăн тухтăра йатланă.

Çакăн пек хăтланса кăтартнă карйериссем. Анчах тÿрĕ работниксемпе коммуниссене партирен кăларттарса вĕсен йатне варалама пăхнă Михайлов çинчен сăмах та хускатман-ха. Зорина ответ тыттарман, Герасимова анчах хытă йатласа асăрхаттарнă. Герасимов çинчен РĔК çумĕнчи парторганизаци февралĕн 15-мĕшĕнче тин сÿтсе-йаврĕ. Партком секретарĕ Тихонов й. йăнăшсене болђшевикла палăртас вырăнне „Парти Тĕпкомĕ хăйĕн постановленийĕнче елекçĕ-карйериссене тупма разверсткă паман вĕт пире“, тесе Герасимова хÿтĕлеме тăчĕ, Зорин çинчен сăмах та хускатмарĕ. ПСК(б)П райкомĕ те хăйĕн йăнăшĕсем çинчен уççăнах каласшăн мар, мĕншĕн тесен райком хăй те елекçĕсем хыççăн кайнисем пулнă. Çавăнпа та ĕнтĕ „Колхоз хаçачĕ“ те никама илтĕнмеле мар,—епĕр те йăнăш турăмăр çав“;—тенипех иртерсе йарать. Паллах, йăнăшсене болђшевикла тÿрлетни пулмасть ун пек ĕçлени.

В. И.

Пуçламĕш организацисене ĕçре пулăшмала

Сталин йулташ йаланах парти руководителĕсене парти массипе, рабочи класпа, хресченсемпе, ĕç интеллигенципе тачă çыхăнса тăрса, алла-аллăн тытăнса ĕçлеме вĕрентет.

ПСК(б)Партин Вăрмар райкомĕнче ĕçлекенсем районри пуçламĕш организацисенчи ĕçсем çинчен „сводкăсем“ тăрăх анчах пĕлеççĕ.

— Пирĕн районри пуçламĕш организацисенче пуринче те Пленум решенине сӳтсе-йавнă, — теççĕ парти райком секретарĕсем.

Анчах ĕçре йалтах урăхла. Вăрмартан 6—7 километртра ларакан Кивĕ Шулханти „Смычка“ колхоз çумĕнчи пуçламĕш парторганизацинче Тĕпком Пленумĕн решенине сӳтсе-йавман, ун çинчен пĕлмеççĕ те. Ку кăна мар, тата кунти коммунистсем 3 уйăх хушшинче те политзаңатинче пĕр хут та пулман. Пуçламĕш организацинче пуху пулманни те икĕ уйăх ытла ĕнтĕ. Кивĕ Шулханти коммунистсем йалти халăха вĕрентсе, ĕçре пулăшса пырас тĕлĕшпе калама çук начар ĕçлеççĕ. Халь акă халăх хушшинче политикăла агитаци ĕçĕ сӳнсех ларнă, халăха пуçтарса докладсем туса ирттермеççĕ. Çавăн пекех кунта комсомолăн пуçламĕш организацийĕ те начар ĕçлет. Кунта парти ретне кĕме тăрăшакан çынсем пур. Акă, Иванов Гаврил—колхоз бригадирĕ. Вăл хăйĕн ĕçне лайăх туса пырать, ĕçлеме пултаракан примерлă çын. Афанасьев Иван вулав çурт пуçлăхĕ. Производствăра сакăр çул хушши рабочи пулса ĕçленĕ. Икĕ çул хушши колхозра ĕçленĕ, халь вулав çурт пуçлăхĕ пулса икĕ çул хушши ĕçлет ĕнтĕ. Вăл вĕренме те, ĕçлеме те тăрăшакан çын.

Ивановпа Афанасьев пек тăрăшса примерлă ĕçлекенсем колхозра татах та нумай. Вĕсем коммунистсен парти ретне кĕрсе — пĕтĕм чĕререн, мĕнпур хастарлăхпа тăрăшса ĕçлесшĕн. Анчах йалти парторганизаци начар ĕçленипе парти ретне кĕреймесĕр тăраççĕ.

Мăнçырмари „Çĕнĕ пурнăç“ колхозри парторганизаци ĕçне те мухтамалийех çук. Ку организацинче те ПСК(б)П Тĕпком Пленумĕн решенине тĕплĕн сӳтсе-йавса, унтан тухса тăракан ĕçсене туман. Чăнах кунта, йанварĕн 29-мĕшĕнче, пуçламĕш организаци пуху туса Пленум решенине сӳтсе-йавнă. Анчах та унтан тухса тăракан ĕçсене тăвасси çинчен нимĕн те йышăнман. Пуху протоколĕ çинче пушă, çырман вырăн хăварнă та: — малашне мĕнле ĕçлемелине, парторганизаци ĕçне йĕркелемелине çавăнта çыратпăр, теççĕ

Парти Тĕпком Пленумĕн решенине йалти комсомолецсемпе халăха ăнлантарса парас ĕçе халĕ те пулсан тивĕçлипе организацилемен. Йалта 18 комсомолец. Çак комсомолецсем октябĕр уйăхĕнчен вара политзаңатинче пĕрре те пулман. — Пирĕн пропагандис çук, — тесе тăраççĕ. Анчах парти тата комсомол райкомĕсем пропагандис тупса парасшăн тăрăшмаççĕ.

Партин Вăрмар райкомĕн çав çитменлĕхсене хăвăртрах пĕтермеле. ПСК(б)Парти Тĕпком Пленумĕн решенине кашни пуçламĕш парторганизаци, кашни коммунис вĕренсе, унтан тухса тăракан ĕçсене хăвăртрах пурнăçлассине организацилемеле.

Парторганизаци тата уйрăм коммунистсем мĕнле ĕçленине сводкăпа сведенисем тăрăх мар, вырăна тухса пĕлмеле. Ĕçри çитменлĕхсене пĕтерме, ĕçе лайăхлатса йама пулăшма коммуниссене çийĕнчех кирлĕ канашлусем памала, куллен кун пĕр ывăнмасăр, пĕр ӳркенмесĕр вĕрентсе пымала.

Н. Косойкин.

Йалсоветсен отчотлă кампанине йертсе пымаççĕ

КАНАШ. („Чăваш Коммунĕ“ корр.). Йалсовечĕсен тата райĕçтăвкомăн суйлавçăсем умĕнче отчот тăвассине йанвар уйăхĕнчех пĕтермеле пулнă. Анчах ку ĕçпе çителĕклĕн ĕçлеменнине пула февралĕн 15-мĕшне те райĕçтăвком хăйĕн отчотне 18 йалсоветра кăна ирттернĕ. Райĕçтăвком суйлавçăсем умĕнче отчот туса парас ĕçе тăсса пынипе пĕрлех йалсовечĕсен те отчот тăвас ĕç кайа йулса пырать.

Чылай йалсоветсенче суйлавçăсем отчот хыççăн, ку таранченхи ĕçсенчи çитменлĕхсене палăртса малашне пур ĕçре те тĕплĕн йертсе пымалине кăтартса параççĕ. Кив Шелттем йалсовечĕ отчот туса парсан; суйлавçăсем парса хăварнă наказсене çителĕксĕр пурнăçласа пыни курăнчĕ. Наказ тăрăх йалсоветра туллимар вăтам шкул çуртне, икĕ кĕпер, пĕр пысăк çăл тата шкул йĕри-тавра карта тытмала пулнă, анчах йалсовечĕ çак ĕçсене пурнăçа кĕртесси çинчен шутласа та пăхман. Çакăнпа пĕрлех йалсовет выльăх-чĕрлĕх ĕрчетессин государствă планне пурнăçлассипе те чăтма çук начар ĕçлесе пынă. Йалсовет ĕнесĕрлĕхе пĕтерес тĕлĕшпе пĕре те тăрăшман. Ĕнесĕр хуçалăхсем халь 13 хуçалăх шутланаççĕ.

Хутла пĕлменнисемпе сахал пĕлекенсене вĕрентес тĕлĕшпе йалсовет вуçех те ĕçлемест. Йалсовечĕпе хутла пĕлменнисем 130 çын шутланаççĕ, шкул çулне çитнĕ ачасем 44 ача шкула çӳремеççĕ.

Йалсоветри колхозсенче тата йединоличниксем хушшинче те çуракине хатĕрленес ĕç калама çук начар пырать. Вăрлăхсене суртлас, улăштарас, çĕре çемçетмели вырăнти йапаласене хатĕрлес, агротехникăна вĕренес ĕçсем йапăх пыраççĕ. Çапах та йалсовечĕ (председателĕ Амбросев) уй-хир секци ĕçне чĕртсе йарасси çине çаврăнса пăхмасть. Секци руководителĕ Захаров хăйĕн тĕп ĕçне маннă.

Пĕтĕмĕшпе илсен йалсовет çителĕксĕр ĕçленĕ, суйлавçăсем парса хăварнă наказсене пурнăçламан, секцисене йертсе пыман.

В. Васильев.

Коммуниссен районри пухувĕ

Çак кунсенче Хĕрлĕ Чутай районĕнчи парти членĕсемпе кандидачĕсен пухувĕ пулса иртрĕ. Пухура Парти Тĕпкомĕн йанварти Пленумĕн решенийĕсене йепле пурнăçласа пыни çинчен сӳтсе-йаврĕç.

Пренире тухса каласакансем нумай пулчĕç. Вĕсем пурте—парти, комсомол, профсойуз, совет органĕсене тата колхозсене кĕрсе ларнă халăх тăшманĕсене кăкласа кăларнипе пĕрлех, тӳрĕ ĕçлекен çынсенех тăшман вырăннĕ курса партирен те, комсомолтан та, профсойузран та, колхозран та, ĕçрен те кăларса пăрахнисем пулнине палăртрĕç.

Ку ĕçре пуçламĕш парторганизацисем те, парти райкомĕнче ĕçлекенсем те йăнăш турĕ. Парти райкомĕпе пуçламĕш организацисем уйрăм коммуниссем çинчен панă жалăбасене тĕплĕн тĕрĕслемен. Акă Фондеркин йулташ çинчен панă материалсене çителĕклĕ таран тĕрĕслемесĕрех пуçламĕш парторганизаци ăна партирен кăларнă. Ку решенипе райком та килĕсше ларнă, çирĕплетнĕ. Халĕ парти райкомĕ Фондеркина партирен кăлармала тунă хăйĕн решенине пăрахăça кăларнă, Фондеркина парти билетне кайала таварса памала тунă, йăнăшсене тӳрлетнĕ.

Тунă йăнăшсене тӳрлетесси вăраххăн пырать. Уйрăмах учителсен профсойузĕпе çутĕç пайĕ ку тĕлĕшпе çителĕклĕ ĕçлемеççĕ.

Парти Тĕпкомĕн йанварти Пленумĕн решенийĕсене сӳтсе-йавнă чухне хăшпĕр пуçламĕш организацисем тунă йăнăшсене большевикла йышанса хăварт тӳрлетес вырăнне, ăна тата та тарăнлатнă. Акă райĕçтăвком çумĕнчи пуçламĕш парторганизаци хăй тунă йăнăшсене хăйех тӳрлетес вырăнне,— хăйсем çинчен ответлăха сирсе йама пăхнă.

Коммуниссене политикла воспитани парас ĕç районра чăтма çук йапăх пырать-ха. Тухса каласакансем:—Райкомăн 3-мĕш секретарĕ Петухов йулташ, февралĕн 4-мĕшĕнче, райком çумĕнчи агитаторсен семинарине ирттерме çителĕклĕ хатĕрленесе пыман, семинар усă сахал пачĕ,—терĕç.

Райкомăн тепĕр çитменлĕхĕ вăл—тĕрĕс ĕçлекен парти членĕсем тата совет работникĕсем çинчен елеклĕ жалăбă çыракансемпе, карьериссемпе, шкурниксемпе, перестраховщиксемпе çителĕклĕ кĕрешсе пыманни, çавăн йышши çынсене тăрă шыв çине кăларса партилĕ ответ тыттарманни пулать.

Н. Иванов.

УКЕРЧĔК ÇИНЧЕ: „Красноармейец социалисăмла харпăрлăх хуралĕнче“ (Керченскăри Войков йачĕпе тăракан металлурги завочĕ). С. Блохин фото-ӳкерчĕкĕ (Фотоискусствăн Пĕтĕм Сойузри 1-мĕш выставкине тăратнă експонат).

Сойузфото репродукцийĕ.

Хĕрлĕ Çар—никам çĕнтерейми вăй

Кăнтăрла иртнĕренпе 6 сехет çитиччен нумай-малтан Чăвашсен государствă академи театрĕн залĕ халăхпа тулма тытăнчĕ. Пыраççĕ Октябĕр революци, граждăн вăрçи çулăмĕсем витĕр тухнă ватă рабочисем, пыраççĕ сталинла хĕвел ăшшинче ӳснĕ вĕсен ывăл-хĕрĕсем—стахановецсем, инженерсем, техниксем, учителсем, алăстаçсем, килхуçи хĕрарăмĕсем...

Вăхăт 7-мĕш сехет çине кусрĕ. Чатăр икĕ йеннеле уçăлчĕ. Хĕрлĕ Çарпа Тинĕс-Çар флочĕ 20 çул тултарнине саламлакан плакатсемпе, лозунгсемпе капăрланнă сцена çинче хисеплĕ хурал тăрать. Чăсах правительствăн, Парти Обкомĕн, хула комитечĕн тата хула совет членĕсем президиум сĕтелĕ хушшинче вырăн йышăнаççĕ.

Хĕрлĕ Çарпа Тинĕс-Çар флочĕ 20 çул тултарнă йатпа Шупашкар хулинчи ĕçсыннисен чаплă ларувĕ уçăлчĕ. Лару хисеплĕ президиума Сталин, Молотов Ворошилов, Калинин, Каганович, Андрейев, Микойан, Жданов, Йежов, Димитров, Тельман, Хозе Диас, Шмидт, Буденный, Блюхер, Йегоров тата ытти йулташсене суйларĕ. Паттăр Хĕрлĕ Çарпа Тинĕс-Çар флочĕн 20 çул хушшинчи çĕнтерӳлĕ кун-çулĕ çинчен ПСК(б)П Обкомĕн секретарĕ Павлов йулташ доклад тума тытăнать.

—Йулташсем,—тет Павлов йулташ,—февралĕн 23-мĕшĕнче чаплă Хĕрлĕ Çарпа Тинĕс-Çар флочĕ 20 çул тултараççĕ. Коммуниссен партийĕ йертсе пынипе Октябĕр революци çулăмĕнче çуралнă чаплă Хĕрлĕ Çар 20 çул хушши ĕнтĕ хамăрăн тĕлейлĕ совет çĕршывĕн чиккисене мухтавлăн хураллаcа тăрать.

Малала Павлов йулташ Хĕрлĕ Çарăн граждăн вăрçи вăхăтĕнчи пурнăçĕ, Ленинпа Сталин партийĕ йертсе пынипе Хĕрлĕ Çар тунă пысăк çĕнтерӳсем, Хĕрлĕ Çарăн халĕхи никам та, нихăçан та нимĕнле вăйпа çĕнтерейми вăйĕ çинчен тĕплĕн каласа парать.

Доклад пĕтнĕ хыççăн шеф полкĕнчен килнĕ командир Собачников йулташ сăмах илет.

— Йулташсем,—тет Собачников йулташ,—епĕр Хĕрлĕ Çарпа Тинĕс-Çар флочĕ 20 çул тултарнине уйавланă кун татах та татах Рабочисемпе Хресченсен Хĕрлĕ Çарĕ тата ĕçсыннисем социалисăмшăн кĕрешнине пăхса тухатпăр.

Пирĕн полк, пĕтĕм Хĕрлĕ Çар пекех, нумай йăвăрлăхсене çĕнтерсе тухрĕ. Пирĕн партизанла отрйадсенчен çирĕпленсе ӳснĕ полк халĕ совет çĕршывĕн шанчăклă хуралçи пулса тăчĕ.

Пирĕн полк Хĕрлĕ Çар уйавĕ умĕн пулса иртнĕ инспекторла тĕрĕслӳре пур кăтартусем тăрăх та дивизире иккĕмĕш вырăна тухрĕ. Епĕр хамăр умма дивизире пĕрремĕш вырăна тухас задачăна лартатпăр. Шанма пултаратăр, епĕр хамăр сăмаха пурнăça кĕртетпĕр (хыттăн алă çупаççĕ).

Чăваш АССР Халăх Комиссарĕсен Совечĕн председателĕ Спасов йулташ шеф полкĕн политикпа çар ĕçне вĕренес тĕлĕшпе малта пыракан бойецсене парнелеме 10 пин тенкĕ укçа парасси çинчен правительствă йышăннă решенийе вуласа парать. Залри халăх вăл решенийе хыттăн алă çупнипе саламлать.

Чаплă лару хупăннă хыççăн Чăвашсен государствă академи театрĕн коллективĕ „РАЗЛОМ“ пйесăна выльаса пачĕ.

Председател отчотлă пухува пымарĕ

Ĕсмĕл йалсовечĕ (Сĕнтĕрвăрри р.) суйлавçăсем умĕнче отчот парас ĕçе калама çук йапăх организациленĕ.

Йанварĕн 31 мĕшĕнче тата февралĕн 2-мĕшĕнче Ĕсмĕл йалĕнчи суйлавçăсене кирлĕ пек пĕлтермен пирки, йалсовечĕн отчотлă пухувне ирттереймен. Февралĕн 3-мĕшĕнче суйлавçăсем пухува пуçтарăннă, анчах йалсоветĕнчен пухува отчотпа пыма çын „тупайман“ пирки, суйлавçăсен йалсовет отчотне итлемесĕрех кăмăлсăрăн саланма лекрĕ. Йалсовет председателĕ Казанов йулташ пухува пымамар, февралĕн 1 мĕшпе 3-мĕш хушшинче йалсоветĕнче те ĕçлемен, хăйне вальли вута хатĕрленĕ. Çапла ĕнтĕ йалсоветĕнче виçĕ кун хушши, дежурнăйсемсĕр пуçне, никам та пулман. Йалсоветне ĕçпе пыракан çынсене хăйсен ĕçне тутармасăрах тухса кайма лекнĕ.

Ĕсмĕл йалĕнчи суйлавçăсем йалсовет отчотне итлесех тесе февралĕн 5-мĕшĕнче татах пухува пуçтарăнчĕç. Суйлавçăсен пухувĕ уçăлчĕ. Йалсовет председателĕ Казанов йул. суйлавçăсен пухувĕнче отчот тумалине пĕлсе тăрах пухува каллех пымарĕ. Çавăнпа та ăна чĕнме йагарласах колхознике йачĕç, анчах Казанов йул. килне (Казанов Хорн йалĕнче пурăнать) тухса кайма ĕлкĕрнĕ. Суйлавçăсен каллех йалсовет отчотне итлемесĕрех килĕсене саланма лекрĕ.

Н. Петров.

Çирĕп сывлăхшăн

Ĕлĕкхи нуша пурнăçран йулнă трахома пĕтерессипе Тимĕрçкассинчи (Шăхасан р-нĕ) Максимов трахработник тăрăшса ĕçлет. Вăл ĕçлеме тытăннăранпа Тимĕрçкассинче трахомлисен шучĕ чаксах пырать.

1937—38 çулхи вĕренӳ çулĕн пуçламăшĕнче Тӳçи Çармăсри туллимар вăтам шкулта вĕренекенсенчен 29-шĕ трахомлă пулни паларнă. Февралĕн 1-мĕшне Максимов трахработник 68 ачана трахомран сыватнă. Х. Кузнецов.

Вулав çуртĕнче йĕрке çук

Чĕнер йалĕнче ((Сĕнтĕрвăрри р-нĕ) вулав çурчĕ уçăлни пиллĕкĕмĕш çул çине кайрĕ ĕнтĕ. Анчах вулав çурчĕ йĕркене кĕрсе çитеймест-ха. Вулав çуртĕнче кĕнекесем çителĕклĕ мар. Шашкă-шахмат, домино вăйа хатĕрĕсене туйанман. Вулав çурт пуçлăхĕ М. Инспекторова й. вулав çуртне йĕркелĕ çӳремест. Йаковлев.

Тинĕс чиккисен сыхăлăхĕнче

ССР Сойуз Тинĕс-Çар Флочĕн историлĕ çулĕ

Пирĕн çар флочĕ ĕлĕкренпех революцилĕ идейăсен çăлкуçĕ пулнă. Историре XVII тата XVIII-мĕш ĕмĕрсенче матроссем хумханнине, Балти матросĕсем 1825 çулта декабриссен выступленине хутшăннине ,народовольцăсен йухăмне хутшăннине тата, йулашкинчен, пролетариатăн XX ĕмĕр пуçламăшĕнче ĕçлеме пуçланă паттăр партипе—большевиксен партийĕпе тачăн çыхăнса тăнине çырса хунă.

Пирĕн флот пĕтĕм тĕнчери революцилĕ кĕрешӳсен историне çав тери мухтавлă страницăсем çырса хучĕ. „Потомкин“, „Очаков“ йачĕсем. Шмидт лейтенант йачĕ. Кронштадтри восстани, „Память Азова“ çинчи восстани, Свеаборгри восстани—мĕлйуншар çынсемшĕн паллă. Ирĕклĕхшĕн, халăх прависемшĕн, социалисăмла идейăсене пурнăçа кĕртессишĕн хăйсем çине тăрса, паттăрăн кĕрешнине матроссем йаланах большевиксен партийĕпе, Ленинпа тата Сталинпа тачăн çыхăнса туса пынă. Вăрттăн ĕçлекен матроссен группisемпе Питĕрти большевиксен организацийĕ хушшинчи организацилĕ çыхăнува 1903 çултах та ĕнтĕ туса йĕркеленĕ. 1905 çулта „Потомкин“ восстани тунă вăхăтра, Ленин ĕçсем мĕнле аталаннине хăй сăнаса пынă, вĕсене йертсе пынă тата вăл восстани тăвакан матроссем патне çӳренĕ. 1906 çулта, Петербургра пурăннă чухне, Ленин хăй Балти флочĕн матросĕсене çапăçма хатĕрленес тата кĕрешес ĕçре йертсе пынă... Тĕнчери вăрçă вăхăтĕнче, Ленинпа Сталин империалисăмла вăрçа хирĕç кĕрешме чĕнсен ,чи малтан вырăс матросĕсем çапăçува тухнă: 1915 çулта вĕсем Балтикăра, „Гангут“ линейлă карап çинче (халĕ „Октябрьская революция“ йатлă линкор) восстани пуçласа йанă.

1917 çулти революци умĕн вырăс флочĕ хăватлă çар организацийĕ пулнă. Балти флотĕнче 100.000 ытла çар морйакĕсем, Хуратинĕс флотĕнче 40.000 йахăн морйаксем пулнă. Тĕп карапсем çинче, батарейăсенче, тинĕс çыранĕсенчи чаçсенче матроссен вăрттăн ĕçлекен революцилĕ организацийĕсем пулнă, вĕсем хĕрӳлĕн ĕçленĕ. Матроссем патша терророрĕнчен хăраман, кирек йепле хăратнине, патша адмиралĕсем „асăрхаттарнисене“ хăлхана та чикмен, вĕсенчен шикленмен. Матроссем тӳррĕмĕнех хăйсен тĕллевĕ патнеле утнă.

Пирĕн флот 1917 çулти революцин малти речĕсенче пынă. Матроссем çине большевиксен партийĕ, вăл хăй рабочисен Хĕрлĕ Гвардийĕ çине тайăннă пекех, тайăнма пултарнă, вĕсем пысăк вăй пулнă. Октябĕрти восстани умĕнхи хăйсен директивĕсенче Ленинпа Сталин флота пысăк вырăн панă. Морйаксем генилĕ çулпуçсен пур заданийĕсене, пур хушувĕсене те пурнăça кĕртнĕ... Пур çынсем те „Аврора “йатне, революцилĕ Кронштадт йатне пĕлеççĕ.

1918 çулти март тĕлне пирĕн флота тĕпренех çĕнетсе улăштарнă. Социалă революци государствăна çӳлтен пуçласа айала çитийех улăштарса, çĕнетсе пынă. Кивĕ вăрçăлă системă выранне ирĕке тухнă халăх хăйне валли çĕнĕ хĕçпăшаллă вăй, шанчăклă вăй туса пынă. Кивĕ, нумай вăхăт пынă вăрçăра ывăннă кадрсене килĕсене йанă. Флота çынсем харпăрхăй ирĕкĕпе нумай пырса кĕнĕ, вĕсем пуринчен ытла пульă айĕнче пулса курнă çамрăксем пулнă.

Флота çĕнетсе улăштарнă вăхăтра пирĕн тĕп тăшман—Германи империалисăмĕ—пире çапса аркатса Балти флотне пĕтĕмĕшпех йарса илме пăхрĕ. Пирĕн флотăн тĕп чăмăрĕ—200 карап ытларах—ун чухне Гельсингфорсра пулнă. Фин заливне пăр шăнтса лартнă. Диверси туса противник икĕ хăватлă пăрçĕмĕрене йарса илнĕ, финсен шурă гвардине ĕçе йанă та çарпа флотăн пĕрлештернĕ вăйĕсемпе наступлени пуçарса йанă. Пирĕн Балти флочĕ тавра майкăч йаванса пынă. Морйаксем пăрсем урлă, пăр çинче нихăçан пулман 180-миллĕ поход туса, тăшманăн мĕн пур планĕсене аркатса тăкнă та флота Кронштадта илсе тухнă. Республикă вальли тинĕс вăйнĕ çăлса хăварнă.

1918 çулта капиталисăмла державăсем пире хирĕç уççăнах пысăк вăрçă пуçарса йачĕç. Интервенцине 14 державă хутшăннă. Çамрăк Совет çĕршывне пур йенчен те хĕсме пуçларĕç. Ленин тата Сталин пролетарилĕ оборонă пуçне тăчĕç.

Пирĕн флотăн питĕ те пысăк задачăсем пурнăçламала пулчĕ. Балти тинĕсĕнчи тĕп вăйсене çăлса хăварнă майĕпе, флот вĕсемне пĕлсе тата сарлакан усă курма пултарчĕ.

Кĕрешӳ пысăк талкипре пынă. Противник пур çĕрте ескадрăсемпе флотилине ĕçе кĕртсе пынă. Балти çинче, Петроград патне кĕрсе кайма хăтланса, 72 карапран тăракан Англи флочĕ çапăçса пынă. Шуррисен флочĕсем Онежски тата Ладожски кӳллисем патне те çырса çитнĕ. Противник пирĕн çурçĕрти шывсем çинче те курăнма пуçланă, вăл Севернайа Двина çине пырса кĕнĕ. Шуррисен шывпа тинĕс вăйĕсем Атăл çинче, Каспи çинче, Хуратинĕс çинче, Азов тинĕсĕ çинче сиксе тухнă. Йапони карапĕсем Владивостокра тата Амур çинче курăна пуçланă.

Вĕсене хирĕç ответлесе, Ленинпа Сталин чĕннипе, хĕрлĕ морйаксем хĕрлĕ отрйадсем тата флотили тума тытăннă. Мĕнле шывсем çинче сиксе тухмарĕç пулĕ большевикла хăйулă канонеркăсем, ишсе çӳрекен баржăсем-фортсем тата хуралта тăракан катерсем! Атăл çинчи хĕрлĕ флотили противника нумай-нумай виçĕ уйăхра (1918 çулти август-октябĕр) çĕмĕрсе, аркатса тăкрĕ. Шуррисен йулашкисене Атăл çинчен Перм затонĕсене хуса кĕртсе йанă. Шуррисем, кайала чакса пырса, унта хăйсен карапĕсене çунтарса йанă.

Пĕр çулталăк — 1918 çулти нойабĕртен 1919 çулти нойабĕре çити—Балтири мухтавлă флот нихăçан пулманла хĕрӳлĕн кĕрешсе пычĕ. Тăшмансем тата вĕсен агентури ультиматумсем кăларса тăратрĕç, матроссене вĕлерессипе хăратрĕç, „пĕтĕм тĕнчери чи вăйлă“ Англи флотне хирĕç тăни ахалех пулать, тесе сăмахсем сарчĕç. Тăшмансем диверсилĕ ĕçсем туса пычĕç, провокаци туса пĕр форт çинче („Красная Горка“) восстани кăларчĕç. Кронштадтра хăйĕнчех снарйадсем ӳкме пуçларĕç. Вăра фронта Сталин йулташ хăй пычĕ. Кронштадта тата Петрограда хӳтĕлессине вăл хăй аллине илчĕ. Вăл дезорганизацилĕхе пĕтерчĕ те хăй хавхалантарнă отрйадсене тата Балти ескадрине çапăçува илсе кайрĕ. Вăра, пăлхав çĕкленĕ форта аркатса йамалах персе, штурмласа илнĕ.

Кĕрешӳ Днепр çинче, Дон çинче те тата Атăл тăрăхĕн анатри вырăнĕсенче те хĕрӳленсе кайрĕ... Астраханьрĕ оборонă ĕçĕсене Сергей Миронович Киров йертсе пынă. Вăл Каспи тинĕсне тасатма, Бакува тавăрса илме, çĕршыва нефт тавăрса пама хушса Ленин панă заданисене тĕрĕс пурнăçласа пынă. Сталин йулташ пуçарнипе Каспи тинĕсĕ çине Балтикăран çар карапĕсем йарса панă. Вĕсем Мариински системă тăрăх, Атăл тăрăх пынă.

Фронтăн Каспи участкĕнче кĕрешӳ икĕ çул пынă. 1920 çулти май уйăхĕ тĕлне Киров йертсе пыракан Каспи флочĕ Баку хулине кайала турса илчĕ тата шурăгвардейецсен пĕтĕм флотне тыткăна йарса илчĕ. Мухтавлă Совет морйакĕсен аллине противникăн вуншар карапĕсем тата нумай турса илнĕ пурлăхсем лекрĕç.

Пур фронтсенче те хĕрлĕ морйаксем кĕрешрĕç. Вĕсем йе бронепойăссем çинчĕ (аса илĕр-ха матрос пулнă Папанина,—халĕ Совет Сойузĕн Геройне), йе отрйадсенче, хăшпĕр чухне утлă çарта, хăшпĕр чухне авиацире (аса илĕр Молокова, —Балти ватă матросне, халĕ Совет Сойузĕн Геройне) пулса çапăçнă.

Çарти морйаксем партин кирек йепле заданине те пурнăçа кĕртнĕ. Вĕсем чи ответлă участкăсенче—Смольнăйра хурал тăнă, интервентсен инăл таранах хĕçпăшалланнă кадрлă чаçĕсене хирĕç çапăçува тухнă. Пĕтĕм Российăри Чрезвычайлă комиссире пулнă, шывсăр тата çунтармали йапаласемсĕр чукунçулсем тăрăх çӳресе, чи кирлĕ йапаласене вырăнтан вырăна турттарнă, тинĕсе ларма патне çитнĕ каналсемпе çырмасем тăрăх карапсене сĕтĕрсе çӳренĕ, карапсене, батарейăсене, пойăссене, фронтсене хĕçпăшаллатнă. Нимĕнле çухатусем те социалисăм идейипе хавхаланнă тата вĕçне çитиех Ленинпăн, Сталинпăн тăракан пирĕн морйаксен вăй-хăватне чарса лартма пултарайман.

Пирĕн флот тăван Хĕрлĕ Çарпа пĕрле 1922 çулти кĕркунне тĕлне пур çапăçусенчен те çĕнтерекенĕ пулса тухрĕ. Балтикăра, Çурçĕрте, Атăл çинче, Дон çинче, Днепр çинче, Хуратинĕсре тата Азов тинĕсĕнче, Каспи çинче, Вăтам Ази шывĕсем çинче, Амур çинче тата Лăпкă океанра противника çĕмĕрсе тăкнă та ывăтса йанă. Пĕр Балтикăра кăна епĕр тинĕс тĕпне противникăн 15 карапне путарнă.

Пĕтĕм Российăри Советсен IX сйесĕ хуça пек, çирĕппĕн каларĕ: интервентсемпе тата белогвардейецсемпе пилĕк çул хушши кĕрешсе пысăк çухатусем тунă Хĕрлĕ флота вăйлатмала, тĕреклетмеле, терĕ.

Епĕр кайала туртса илнĕ базăсемпе портсенче—Кронштадтра, Севастопольре, Бакура, Хабаровскра, Владивостокра хĕрӳлĕ, кăткăс та вирлĕ ĕç пуçланчĕ. Ленинла комсомол ашшĕсене тата пиччĕшĕсене, Октябĕр ăрувĕнчи морйаксене пулăшма пролетарилĕ çамрăксене йачĕ. Граждăн вăрçи туса хăварнă сурансем тӳрленме тытăнчĕç. Çунтарса йанă йе бомбăсемпе çĕмĕрсе пĕтернĕ пристаньсене, складсене, çулйĕрсене йусаса лайăхлатас ĕç пуçланчĕ.

Пирвайхи вĕренӳ похочĕсем пуçланчĕç. Балтикă 1923—24 çулсенче çĕнетнĕ карапсемпе вĕсен комсомолецсенчен тăракан составĕсене курма пултарчĕ. Вăл карапсем Кольск бухтинче, Скандинави çыранĕсенче сике-сике тухрĕç... Хуралти карапсенчен пĕри Архангельскран Владивостока çити поход турĕ, вăл Англипе Китай порчĕсене кĕре-кĕре тухрĕ. Карап шторма, тайфуна лекнĕ—пурне те çĕнтерсе пыни ĕçре ,тĕрĕсленнĕ пĕрремĕш класлă морйаксен—вырăс морйакĕсен çавăн пек тумала та, вĕсен мухтавлăхне, вĕсен нумай ĕмĕрсем хушши тунă опытне пĕтĕм çут тĕнче пĕлет. Флотăн çĕнĕ кадрĕсем — вĕсене халăх геройĕсем—Фрунзе тата Ворошилов вĕрентсе ӳстернĕ тата малала илсе пынă,—йуратса та тăрăшса çĕнĕ флот туса панă.

1924—29 çулсенче пĕрин хыççăн тепри хăйсен суранĕсене тӳрлетнĕ карапсем стройа тăчĕç. Портсемпе базăсем мăлатуксен сассисемпе йанраса тăчĕç... Карапсене йусас ĕç пычĕ.

1929 çулта вăрçă чĕртсе йаракан агрессорсем пирĕн Инçет-Хĕвелтухăçне хыпаласа пăхма хăтланчĕç. Икĕ çĕртен çапса пирĕн Амурти çар флотилийĕ тăшман флотилине ним йулмиччен çĕмĕрсе тăкрĕ. Хĕрлĕ Çарпа пĕрле пирĕн морйаксем противнике шăлсем аркатмали урок туса пачĕç. Тăшман вăрçă пуçласа йама хăрарĕ.

Çул хыççăн çул иртсе пычĕ. 1930—37 çулсе иртсе кайрĕç. Аслă Сталин халăха çĕнĕ çĕнтерӳсем патне илсе килчĕ. Пирĕн халĕ ĕнтĕ пĕрремĕш класлă, Иевропăра пĕрремĕш вырăн йышăнса тăракан промышленнăç пур. Пирĕн халĕ ĕнтĕ пĕтĕм тĕнчипе чи вăйлă йалхуçалăхĕ пур.

Сталинла пйатилеткăсен çулĕсенче совет морйакĕсем Арктикăра тата ытти тинĕссем çинче хăйсене мухтавлăхпа витсе хучĕç.

Çĕршыв пирĕн ӳсет, хăватланать. Заводсем пирĕн чи лайăх конструкцилĕ кирек йепле машинăсем те туса кăлараççĕ. Пирĕн промышленнăç оборонăла техникăла кирек йепле заданине те пурнăça кĕртме пултарать.

1937 çулта вара пирĕн правительствă В. М. Молотов йулташ сăмахĕсемпе каларĕ: ССРС вальли пысăк флот тума вăхăт ĕнтĕ, терĕ. Епĕр нумай çулсем хушши кадрсем ӳстертĕмĕр. Вĕсем тинĕсри революцилĕ мухтавлă традицисемпе сăрхăнса, сталинла чĕрĕ ăс-хакăлпа сăрхăнса ӳснĕ. Халĕ ĕнтĕ çав кадрсен ăсне, пуçарулăхне тата паттăрлăхне судостроенин тата машиностроенин пĕрремĕш класлă техникипе пĕрлештерсе, совет халăхĕ хăйĕн пысăк флотне тума тытăнчĕ. ССР Сойузĕн хăйĕн пĕтĕм тинĕсĕсемпе океанĕсенче тули вăйлă ескадрăсем пулаççĕ. Çак вăй кирлĕ пулсан, Сталинăн мĕн пур заданийĕне, аслă совет халăхĕн мĕн пур заданийĕсене пурнăça кĕртет.

Всеволод Вишневский.

Радио. „Йермак“, 22.II.38 ç.

Мускав, Кремль

Сталин, Молотов, Ворошилов, Каганович, Калинин, Микойан, Чубарь, Андрейев, Косиор, Жданов, Йежов, Петровский, Ейхе, Хрущчев йулташсене

Совет халăхĕн ирĕкĕпе, партипе правителствă ирĕкĕпе епĕр Çурçĕр полюсне ĕçлеме кайрăмăр. Епĕр пĕр шикленмесĕр ĕçлерĕмĕр, мĕншĕн тесен тăван çĕршыв пире йаланах пулăшма пултарнине епĕр пĕлсе тăнă. Пирĕншĕн йăвăр вăхăт килсе тухсан, пирĕн пата пароходсем, самолотсем, хăватлă пăрçĕмĕрен йачĕç. Епĕр партине тата Сире, хаклă йулташ Сталин, пирĕн çине аттеле тăрăшса пăхнăшăн вĕçĕмсĕр тав тăватпăр. Есĕр пире чĕререн саламлани, епĕр пурнăçа кĕртнĕ заданине Есĕр пысăка хурса хаклани—çавсем пире таранăн хумхантарчĕç, пире тулли савăнăçлă турĕç. Сирте, Сталин йулташ, совет халăхĕн телейĕ. Есĕр—пирĕн мухтав тата йурату. Есĕр панă кирек мĕнле заданине пурне те пурнăçа кĕртме, совет халăхĕн шанчăклă ывăлĕсем пулма епĕр йаланах хатĕр.

Папанин, Кренкел, Ширшов, Федоров.

Совет халăхĕ паттăрсене саламлать

Хăйулă папанинцăсен паттăрлăхĕпе тĕлĕнсе савăнса, пĕтĕм совет халăхĕ Гренланди тинĕсĕн пăрĕсем хушшипе тата штормсем витĕр кусса çÿрекен „Çурçĕр полюсĕ“ станци патне пăрçĕмĕренсем йеплее çывхарса пынине тимлĕн сăнаса пычĕ.

— Папанинцăсене пăр çинчен илсе тухнă!—Çак хыпар пĕтĕм аслă Совет Сойузĕ тăрăх çиçĕм пек хăвăртлăхпа сарăлчĕ. Çав хыпар пĕтĕм халăха савăнтарчĕ.

Рабочисем, колхозниксем, учонăйсем, искусствă работникĕсем, Хĕрлĕ Çар бойецĕсем хăйсен пиншер резолюцийĕсенче, çырусенче, телеграммăсенче, митингсенче хĕрÿлĕн тухса каланисенче Совет халăхне çавăрса илнĕ савăнăç туйăмне кăтартса параççĕ.

— Епĕр сирĕн хăйулăхпа паттăрлăх сталинла заданине ăнăçлăн пурнăçа кĕртме пулăшассине шанса тăнă. Есĕр çав заданине чăплăн пурнăçа кĕртрĕр. Совет халăхĕн историне есĕр çĕнĕ те мухтавлă страницă çырса хутăр,—тесе çыраççĕ Горьки облăçĕнчи Арзамас районĕнчи Фрунзе йачĕпе тăракан ертелри колхозниксем.

— Хăйулă папанинцăсен паттăрлă ĕçĕ Сталин хавхалантарса çĕклентерсе пыракан Совет халăхĕ мĕн тума пултарнине пĕтĕм тĕнчене кăтартса пачĕ. Полярниксем тăван çĕршыва часрах таврăнасса кĕтетпĕр. Вĕсене епĕр пирĕн металлурги комбинатне килсе курма сĕнетпĕр,—тесе çыраççĕ Магнитогорскри металлурги комбинатĕнчи рабочисем. Уфари мартăн 8-мĕшĕ йачĕпе тăракан çĕвĕ çĕлекен фабрикă коллективĕ папанинцăсем патне йанă телеграммăри кашни йĕрке хĕрÿлĕн йуратнă туйăмпа тулнă: сире, пархатарлă паттăрсене, пирĕн тăван çĕршывăн чапĕшĕн, партипе правителствă заданине пурнăçа кĕртессишĕн хăйулăхпа паттăрлăх тĕслĕхĕсене кăтартнăшăн хамăрăн тăван та йуратнă ывăлсем пекех ăшшăн ыталатпăр. Чыс та мухтав паттăрсене—папанинцăсене, „Таймырпа“ „Мурман“ пăрçĕмĕренсем çинчи морйаксене! Чыс та мухтав Ленин—Сталин партине! Чыс та мухтав çулпуçне, туса, тăван аттемĕре Сталин йулташа, пирĕн социалисăмлă тăван çĕршывăн паттăр ывăлĕсене ÿстерсе çитĕнтернĕскерне!

—Папанина, Ширшова тата Кренкеле телейлĕ халăх çеç, хумханулă халăх çеç хăйĕн чи йуратнă ывăлĕсене, хăйĕн геройĕсене калама пултаракан йурату, савăнăç, вĕçĕмсĕр мухтанулă сăмах калăр пирĕнтен,—тесе çыраççĕ Киргиз СС Республикинчи Наукатск районĕнчи ĕççыннисем хăйсен ССР Сойузĕн Аслă Совет депутачĕ патне—папанинцă Й. К. Федоров патне, ăна Çурçĕр полюсĕн хăйар касĕсенче пурăннă хыççăн хăйсем патне килсе канма чĕнсе йанă саламлă çырувĕнче.

— „Ташмансем пĕлсе, тăччăр: партипе партире мар большевиксем—нимĕнле йăвăрлăхсенчен те хăрамаççĕ,—тесе çырать ССР Сойузĕн Аслă Совет депутачĕ Никита Изотов. — Папанинцăсен хăйулăхĕ пусарулăха, паттăрлăха çуратать, социалисăм çĕнтернĕ ирĕклĕ çĕршывăн çыннисене çĕнĕ çĕнтерусем тума чĕре вăй парса хавхалантарать.

УСС Республикĕн Ĕçтăвакан Тĕп Комитечĕн V-мĕш Çессийĕ Арктикă геройĕсене Украинă халăхĕ йачĕпе саламлать.

Украинă халăхĕ ССР Сойузĕнчи пĕтĕм халăхсемпе пĕрле, тĕнчери мĕн пур ĕççыннисем пекех, сирĕн пурнăçа, сирĕн ăслăлăх йенĕпе туса пынă ĕçе, Çурçĕр полюсĕн вăрттăнлăхĕсене уçса палăртакан ĕçе (çав ĕçсене темиçе ĕмĕрсем тăршшĕпе етемлĕхĕн чи лайăх ăстăнсем пĕлме тăрăшнă, анчах вĕсен ĕçĕ ăнăçлăн пулман) мухтавлă туйăмпа, тĕлĕнсе сăнаса пычĕ,—тесе çырнă саламланинче. Есĕр, сталинла тăрăшса пăхнипе хĕрÿленнĕ, сире ССР Сойузĕнчи халăхсем йуратса тăраççĕ, есĕр, Совет богатырĕсем, пирĕн çĕршыва Арктикăна çĕнсе илес тĕлĕшпе кăтартнă хăвăрăн хăйулă ĕçсемпе ĕмĕрлĕхех мухтава кăлартăр.

Дагестан АСС Республикĕнчи Кизляр, Ачикулакс, Кайасулинск, Караногайск тата Шелковск районĕсене Орджоникидзе крайне кĕртесси çинчен

Пĕтĕм Россиăй Ĕçтăвакан Тĕп Комитечĕ йышăннă

ПОСТАНОВЛЕНИ

Пĕтĕм Россиăй Ĕçтăвакан Тĕп Комитечĕ çапла ЙЫШĂНАТ:

1. Кизляр, Ачикулакс, Кайасулинск, Караногайск тата Шелковск районсене хуçалăх йенчĕн ăнăçлăн аталанса пымала тăвас шутпа çав районсене Дагестан АСС Республикĕнчен уйăрса, Орджоникидзе крайне кĕртес.

2. Дагестан АСС Республикĕпе Орджоникидзе крайĕ хушшинчи чикĕне Терек шывĕ тăрăхĕпе тăвас.

3. Дагестан АСС Республикĕнчи вунă сăртлă районри колхозсене Дагестан АСС Республикĕнчен Орджоникидзе крайне кĕртмеле тунă пилĕк районĕн вылăх çÿретмели вырăнĕсемпе усă курма чармала мар тăвас.

4. Орджоникидзе крайĕнче Кизляр, Ачикулакс, Кайасулинск, Караногайск тата Шелковск районĕсенчен Кизляр административлă округĕ тăвас, унăн центрне Кизляр хулине тумала тăвас.

Пĕтĕм Россиăй Ĕçтăвакан Тĕп Комитет Председателĕ М. КАЛИНИН.

Пĕтĕм Россиăй Ĕçтăвакан Тĕп Комитет Секретарĕшĕн— Пĕтĕм Россиăй Ĕçтăвакан Тĕп Комитет членĕ А АРТЮХИНА.

Мускав, Кремль
1938 çулхи февралĕн 22-мĕшĕ.

Украинă ССР Тепĕçтăвкомĕн V-мĕш Çессийĕ

Февралĕн 19-мĕшĕнче Кийевра Украинă ССРеспубликĕн Ĕçтăвакан Тĕп Комитечĕн V-мĕш Çессийĕ уçăлнă. Çессийе ССР Сойузĕн Аслă Совет Президиумĕн Председател заместителĕ, Украинă СС Республикĕн Ĕçтăвакан Тĕп Комитет председателĕ Г. И. Петровский йулташ уçнă. „Украинă СС Республикĕн Аслă Советне суйламали Положени“ пройекчĕ çинчен Украинă СС Республикĕн Халăх Комиссарĕсен Совечĕн Председателĕ Н. М. Марчик йулташ доклад туса панă.

Çессин ĕçĕсенче УК(б)П секретарĕн ĕçĕсене туса пыракан Н. С. Хрущчев йулташ хутшăнса ĕçлет. (ТАСС).

* * *

КИЙЕВ. (ТАСС). Февралĕн 21-мĕшĕнче Украинă СС Республикĕн XIII-мĕш созыври Тепĕçтăвкомĕн V-мĕш Çессийĕ хупăннă. Йулашки ларура Çессин Украинă ССР Аслă Советне суйламали Положенине пĕр кăмăллăн çирĕплетнĕ.

Г. И. Петровский йулташ Çессине, УССР Тепĕçтăвкомĕн Президиумĕ Украинă Халăх Комиссарĕсен Совечĕн председателĕ пулма ССР Сойузĕн Аслă Совет депутатне Д. С. Коротченко йулташа çирĕплетни çинчен пĕлтернĕ. Вăл решенийе пĕтĕм Çессин пĕркăмăллăн çирĕплетнĕ.

Китайри вăрçă

ÇУРÇĔР КИТАЙРА

ХАНЬКОУ, февралĕн 20-мĕш. (ТАСС). Йапонцăсем çар ĕçĕсен тĕп вырăнне Хенань провинцин çурçĕр пайне Бейпин—Ханькоу чукунçул патĕнчи фронта куçараççĕ. Йапони çарĕсем чукунçул çинчи Синьсан йатлă пысăк станцăна тытса илнĕ. Вĕсем хаăл хĕвеланăç йенĕле кусса пыраççĕ. Февралĕн 19-мĕшĕнче çапăçусем Сÿу тавринче пынă. Сылтăм флангра Йапони çарĕсен малта пыракан чаçĕсем Финцÿ хулине (чукунçултан хĕвелтухăçнеле) йышăнса, Хуанхе йуханшывĕн çурçĕр çыранĕсем патне çитсе тухнă. Вĕсем унта Китай çарĕсемпе тĕл пулнă. Фронтăн вăтам участкинче Йапони чаçĕсем Йуаньцунь станци патне çитнĕ. Кунта пысăк çапăçусем пыраççĕ.

Таньцзинь—Пукоу чукунçулĕн çурçĕр участкинчи секторта вăйлă çапăçусем Цзинин, Веньшан хулисем патĕнче тата Ляньсадйань станци патĕнче пулса пыраççĕ.

Шаньси провинцинче Йапони çарĕсем çав провинцин кăнтăрпа хĕвелтухăç пайĕнче Чанчжи хули çине наступлени тума пуçланă. Йапони çарĕсем Личен хулине йышăннă. Датун—Пучжоу чукунçул тăрăхĕнче йапонцăсем Динсанчень станци патне çитиччен (Линширен 13 километр çурçĕреле) малала кайнă.

ВĂТАМ КИТАЙРА

ХАНЬКОУ, февралĕн 20-мĕш. (ТАСС). Чжецзйан провинцинче йапонцăсем Ханчжоу тавринче хăйсен позицисене çирĕплетеççĕ. Китай çарĕсем çав хула çине наступлени туса пыраççĕ. Уху районĕнче (Нанкинран кăнтăрала) Ваньчжи çывăхĕнче (Ухуран кăнтăрпа хĕвелтухăçнеле) Китай çарĕсем йапонцăсенчен хăйсен пирвайхи позицийĕсене кайала çапăсса илнĕ.

Февралĕн 19-мĕшĕнче Китай авиацийĕ Йанцзы йуханшывĕ çинче Йапонин пысăк çар карапне шыва путарнă, тенĕ хыпара çирĕплетеççĕ. Вăрçă пуçланнăранпа Йапонин çар карапĕсене 20 ытла шыва путарнă.

Февралĕн 19-мĕшĕнче каçхине Китай самолочĕсен отрйачĕ Усун районĕнче (Шанхайра) Йапони чаçĕсем çине бомбăсем пăрахнă. Йапони чаçĕсене çав районă хаăл çеç илсе пынă пулнă. Бомбăсем пăрахнин результачĕсем паллă мар. Шанхай районĕнче Китай авиацийĕ сисмен хушăран пырса тапăннине паллă тăваççĕ.

Чиркÿрен клуб тăваççĕ

СĔНТĔРВĂРРИ. Шĕнерпуçĕнче халиччен вечĕрсем, спектакльсем, киносем пĕчĕк шкул пÿлĕмĕнче пулнă. Хаăл усăсăр хупăнса ларакан чиркÿрен клуб тума тытăнчĕç.

Йалта турăсăрсен йачейки çумĕнче турăсăрсен кружокĕ ĕçлет. Ăна учителсем йертсе пыраççĕ. Колхозниксем кашни ернере пĕр хут занятине çÿреççĕ.

В. С.

Испанири фронтсенче

Испанин оборонă министерстви февралĕн 21-мĕшĕнче пĕлтернĕ тăрăх, Теруел секторĕнче хăйар çапăçусем пулса пыраççĕ. Республика çарĕсем пăлхавçăсен пур атакисене те, сăмахран, Мансуето районĕнче тата Кастральво йалĕ патĕнче, сирсе пăрахнă. Пăлхавçăсем, пысăк çухатусем туса, кайала чакнă. Каçхине пăлхавçăсен çарĕсен темиçе отрйачĕ Теруел патне пырса тухнă, анчах республиканцăсем кунта вĕсен наступленине тытса чарнă. Республикă çарĕсем хăйсен территоринчи кашни пусăм çĕре хыттăн сыхлаççĕ, вĕсем пăлхавçăсене пысăк çухатусем кÿреççĕ.

Республикă авиацийĕ февралĕн 20-мĕшĕнче кунĕпех пысăк активлăхпа çапăçнă. Ирхине 10 сехетре республикăн истребителĕсемпе (вĕсем çирĕмĕн пулнă) пăлхавçăсен виçĕ моторлă самолочĕсем хушшинче çапăçу пулса иртнĕ. Пăлхавçăсен самолочĕсене „Фиат“ тата „Мессершмидт“ йышши самолотсен ескадрильйи йертсе пынă. Республикă летчикĕсем фашиссен пĕр самолотне персе антарнă.

11 сехетре республикă ескадрилйисем çĕнĕрен çапăçу пуçласа йанă. Вĕсем Германин „Мессершмид“ йышши пĕр моторлă икĕ самолотне персе антарнă тата фашиссен икĕ моторлă пĕр самолотне персе ÿкернĕ.

12 сехет те 50 минутра республикăн темиçе истребителĕ Пуĕблă де Вальверде районĕнче Германин 20 самолочĕ çине тата истребителсен 4 ескадрильйи çине атакăланă.

15 сехетре республикă самолочĕсемпе пăлхавçăсен икĕ моторлă самолотсен ескадрильйи хушшинче сывлăшра çĕнĕрен çапăçу пуçланса кайнă.

Республиканцăсем çав пĕтĕм çапăçусенче 1 самолот çеç çухатнă.

Ытти фронтсенче улшăну çук.

(ТАСС).

Румынири фашисла çĕнĕ „конституци“

Бухарест, февралĕн 22-мĕш. Румынири пичет çĕнĕ „конституцин“ текстне пичетлесе кăларнă. Çав „конституци“ тексчĕ пирки февралĕн 24-мĕшĕнче „плебисцит“ пулса иртмеле. Çав „плебисцита“ Румыни образецĕпе туса иртермеле: сасăланă çĕре хутшăнакансем пит сахал пулаççĕ. „Плебисцита“ хутшăнакан çынсен конституци майлă пулса сăмах тухса каламала. Сăмах тухса калан çĕрте фашисла власçем йатарласа тунă „суйлав комиççисем“ пулмала.

Çĕнĕ „конституци“ Румыни çĕршывĕнче пĕтĕм политикăлă тата общественлă пурнăçа пĕтерсе хуракан çĕр пулать. (ТАСС).

Дипломати корпусĕ саламлани

Папанинцăсене кусса çÿрекен пăр çинчен илсе тухассине ăнăçлăн вĕçленĕ май, Йутçĕршыв ĕçĕсен Халăх Комиссариатне Испани посолĕ господин Паскуа, Литва посланникĕ г. Балтрушайтис, Швеци посланникĕ г. Йулленшерн тата Монголи Халăх Республикĕн полномочнăй представителĕ г. Самбу сывлăх сунса саламсем йанă. (ТАСС).

ХРОНИКĂ

* Пĕтĕм Россиăй Ĕçтăвакан Тĕп Комитечĕ Симферополь хулинче виçĕ район: Чукунçул, Вăтам тата Хула районĕсем тума, Севастополь хулинче виçĕ район: Вăтам, Корабельнăй тата Çурçĕр районĕсем тумала йышăннă.

* Рабочисемпе Хресченсен Хĕрлĕ Çарĕ 20 çул тултарнă май ССР Сойузĕн Халăх Комиссарĕсен Совечĕ çар прокурорне Н. С. Розовский йулташа армвойениурист çар званине панă.

(ТАСС).

Агитаторсен курсĕ

Партин Тутаркас райкомĕ февралĕн 18-мĕшĕнче районри агитаторсен 10 кунлăх курсне организацилерĕ. Курсра 38 агитатор вĕренет. Вĕсем кунтан вĕренсе тухсан „РСФСР Аслă Советне суйламали Положенине“ вĕрентме колхозсене саланаççĕ.

М. Исайев.

Февралĕн 16-мĕшĕнче Çĕрпÿре „РСФСР Аслă Советне суйламали Положенине“ вĕренмели районри агитаторсен 10 кунлăх курсĕ уçăлчĕ. Курсра 70 активис вĕренет.

А. Иванов.

Педучилищăри библиотекă

Йетĕрне. Педучилищăри библиотекă йĕркелĕ ĕçлет. Библиотекă çак çулшăн 2315 тенкĕне йаăхăн тĕрлĕрен хаçат-журнал çырăннă. Библиотекăра Ленин—Сталин произведенийĕсем вулакансене валли çителĕклех. Студентсем пушă вăхăта хаçат-журналсем вуласа усăлă иртереççĕ.

И. Ижейев.

Чăваш Совет Писателĕсен Правленийĕ чăвашсен вăтă писателĕ, ССРС СПС членĕ,

Ильйа Йефимович ЙЕФИМОВ—ТĂХТИ

нумайччен йăвăр чирпе чирлесе выртнă хыççăн февралĕн 22-мĕшĕнче 8 сехетре каçхине вилни çинчен хуйхăрса пĕлтерет.

И. ЙЕФИМОВ—ТĂХТИ ÿтне февралĕн 24-мĕшĕнче 2 сехетре кăнтăрла туберкулез диспансерĕнчен пытарма илсе тухаççĕ.

ЧСПС Правленийĕ.

И. Й. Тăхти

Февралĕн 22-мĕшĕнче Шупашкар больницинче чăваш совет писателĕ Ильйа Йефимович Тăхти йулташ вилсе кайрĕ.

Ильйа Йефимович Тăхти Тăвай районĕнчи Нÿшкасси йалĕнче 1889 çулта çуралнă. 1908 çулта Хусанта учителсем хатĕрлекен семинаринче вĕренсе тухнă. 1908—1914 çулсенче учителте пурăннă. 1918—1919 çулсенче Канашри кăтартулă шкулта ĕçленĕ, 1919—22 çулсенче Çутĕç инспекторĕ пулса ĕçленĕ. 1925—1928 çулсенче литературă институтĕнче вĕреннĕ. 1928—1931 çулсенче педтехникумра преподавател пулса ĕçленĕ. 1931 çултанпа сывлăхĕ начар пирки, обчă ĕçĕсене хутшăнса ĕçлеймест, çапах та илемлĕ литературă йенĕпе ĕçлеме пăрахмасть. Тăхти çырнă йапаласенчен чи пысăкки „Колчак“ поемă шутланать. „Колчак“ поемăна Тăхти 1919 çулта, граждăн вăрçи вăхăтĕнче, шурă çар Хусан хулине тытса илме çывхарса пынă хушăра çырнă. Ку поемăра Тăхти ĕçхалăхĕн ирĕкĕпе власне пĕтерсе, кивĕ пусмăрлă йĕркене кайала тавăрма ĕмĕтленнĕ шурă çара питленĕ.

Вăл çырнă поемăра империалисăмăн тискер йытти Колчакăн ылханлă сăн-сăпачĕ, йун ĕçесшĕн антăхакан ĕмĕчĕ çинчен çутатнă. Вăл çырнă поемă йунĕçевçĕсене хамăр çĕршывран тĕппипех кăкласа тасатас ĕçе пысăк пулăшу панă. Вăл çырнă поемăна граждăн вăрçи вăхăтĕнче кашни чăваш салтакĕ савăнса вуланă, фронтри чылай агитаторсем пăхмасăр калама вĕреннĕ. Вăл çырнă поемă халĕ те кивелмен, халĕ те вăл хăйĕн хакне çухатман, малашне те çухатмĕ.

Тăхти пысăк ĕмĕтпе пурăнатчĕ. Татах та нумай йапаласем çырасси çинчен каласатчĕ. Анчах, вăхăтсăр вилĕм унăн чĕрине тапма чарчĕ. Тăхти пирĕн ĕретрен ĕмĕрлĕхех уйрăлса кайрĕ.

Ç. Елкер, М. Н. Чалдун, Уйăп Мишши, Митта Петĕрĕ, Иван Мучи, Алагер Васлейĕ, Нестер Йанкас, Мих. Белов, Илле Тукташ, Н. Мранька, Иван Ивник.

„Айтар“ драмăна 60 хут лартрăмăр

Чăвашсен 3-мĕш колхоз театрĕ чăвашсен паллă драматургĕ П. Н. Осипов çырнă „Айтар“ драмăна пысăк хаваслăхпа хатĕрленсе 60-мĕш хут выляса пачĕ.

Театр ку постановкăпа Йетĕрнере, Йетĕрнери çу çапакан заводра, Хĕрлĕ Чутайра, Çĕмĕрлере, Вăрнарта, Канашра, Çĕрпÿре, Мăн Сĕнтĕрте, Елĕкре, Засурски лаша заводĕнче, Елĕк районĕнчи йетĕн заводĕнче—мĕн пурĕ 30 пин çынна кăтартнă. Халĕ театр февралĕн 25-мĕшчен Елĕк районĕнчи колхозсенче пулать. Çул пăсăличчен Ишлейпе Шупашкар районĕсенче пулма васкатпăр.

Режиссер В. Михайлов.

КĔСКЕН

ЙЕТĔРНЕ. Алексейевкăри „Хĕрлĕ Çалтăр“ колхозра ваттисем тата хĕрарăмсем хушшинче хутла пĕлменнисемпе сахал пĕлекенсем чылай. Йалти учителсем халĕ 20 çынна вĕрентеççĕ, майăн 1-мĕш тĕлне пурне те вĕрентсе кăларма тăрăшаççĕ.

М. Гаврилов.

◆ Çĕнĕ Ейбеçри (Улатăр районĕ) „Правда“ колхоз кăçал вăйлă тырпул туса илес тĕлĕшпе, социалисăмла ăмăртса ĕçлет. Хаăл колхозăн ĕçри çитĕнÿвĕсене курса, тÿрĕ ĕçлекен йединоличниксем 3 хуçалăх колхоза кĕчĕç.

Çĕнĕ колхозниксем çуракине хатĕрленес ĕçе хастарлăн хутшăнчĕç.

А. Морев.

Сĕнтĕрвăрри районĕнчи колхозсенчи хор кружокĕсем Хĕрлĕ Çарпа Тинĕс Çар Флочĕ 20 çул тултарнă тĕле активлăн хатĕленчĕç. Кĕçĕн Маклашкинри „Хĕрлĕ Çар“ колхоз хорĕ (хора А. Тогайев йулташ йертсе пырать), Сĕнтĕрвăрринчи судоверфри хор тата хулари музыкă активĕ тĕрлĕрен илемлĕ йурăсем йурласа пама хатĕрлеçĕç. Çак хорсем февралĕн 24-мĕшĕнче Чăвашсен радио саракан станци урлă хăйсен пултарулăхĕсене кăтартаççĕ. Концерта районри паллă йурăçă Т. С. Патрик хутшăнать.

Хорсем „Если завтра война“, „Песня о Ворошилове“, „Поднятая целина“ операран илнĕ „Казачья песня“, „Песня о Сталине“ çĕнĕ йурăсене йурлаççĕ.

Пр. Сатур.

Ответлă редактор ĕçĕсене тăвакан И. П. ПАВЛОВ—ПИНЕР.

Шупашкарти Гидрологи партине

вăтам пĕлÿлĕ инженерсемпе техниксем КИРЛĔ

Ĕçукçи килĕшÿ тăрăх.

Çак адреспа пымала: Шупашкар хули Атăл хĕрри, ОСВОД çурчĕ, №-1—53.
2—2

Мĕн вăл çăварни

Февраль уйăхĕн йулашки числисенче çăварни ерни пулса иртет. Çав çăварни вăхăтĕнче кивĕ йăласенчен уйăрăлманнисем ĕçкĕ-çике çÿреççĕ, лашасем кÿлсе йалтан йала çăварни йурри йурласа çÿреççĕ. Паллах ĕнтĕ, çав çăврани йăли çуллен-çул пĕтсех пырать. Октябĕр революци пулнăранпа нумай вырăнсенче çăварни иртермеççĕ. Анчах хăшпĕр районсенче çăварни ернине иртерме тахăçан малтанах хатĕрленсе пыраççĕ, сăрасем пĕçереççĕ, хăнасем пухса ĕçсе çиеççĕ, нумай чухне çапăçаççĕ. Пĕлтĕр çăварни ернинче пĕр-пĕрне хĕнесе амантнă фактсем чылай пулнă. Çав çăварни йăли вăл авалхи кивĕ йăла пулса тăрать, ăна иртерни халăхшăн питĕ сийенлĕ. Сăмахран, примерсем илĕпĕр: пирĕн умра халĕ çуракине хатĕрленес тĕп задачă тăрать, лашасене лайăххрах тăрантармала, тислĕксем тăкмала, тырпулсене хатĕрлемеле. Тата кăçал нумай колхозсенче пысăк строителствă пырать, лаша витисем, тырă хумали ампарсем тăваççĕ, вăрмансем турттараççĕ. Çăварни иртерни çав пысăк ĕçсене чарса тăрать. Хăшпĕр колхозниксем авалхи йăлана асăнса, лашасене кÿлсе чупаççĕ пулсан, вĕсене ывăнтараççĕ, нумай чухне уксахлантараççĕ. Ун çинчен, çав кивĕ йăла тата тĕн праçникĕсем колхоз производствине чăрмантарса пынине, çуракине лайăх хатĕрленсе пыма чăрмантарнине пурте пĕлеççĕ. Çав кивĕ йăлана пăрахăçа кăларас тĕлĕшпе кĕрешÿве вăйлатни кирлĕ халĕ пире.

Çăварни вăл авалхи йăхсен—дикарсен праçникĕ. Авалхи çынсен—дикарсен пурнăç йăлисем хуçалăх йĕркисемпе çыхăнса тăнă, йе çутçанталăкра пулса пыракан тĕрлĕ йавленисемпе, улшăнусемпе çыхăнса пынă. Авалхи етем çутçанталăк пусмăрĕнче пурăннă, ĕç хатĕрсем унăн йапăх, начар пулнă. Хальхи вăхăтри пек пысăк тĕрлĕ машинсем пулман, çавăнпа та авалхи етем çутçанталăкран тĕрлĕ тупăшсем хальхи вăхăтри пек çăмăллăн туса илеймен, ĕлĕк етем питĕ начар пурăннă. Авалхи етемĕн ăс-пуçĕ çутă тĕнчери йавленисене ăнланса илеймĕн, вăл çут тĕнчере улшăнса пыракан йавленисене „усал“ йе „ырă“ сывлăш улшăнтарса пырать пулĕ, тенĕ. Производствă вăйĕ йапăх ÿссе пынипе авалхи çынсен идеологийĕ те, йăли те кайа йулса пынă.

Çăварни йăли те авалхи çынсен хуçалăх йĕркисемпе çыхăнса тăрать. Авал славйан халăхĕсем хĕллехи ĕçсене пĕтерсе çуркуннехи ĕçсене кусас умĕн çăварни ерни туса иртернĕ. Çав ерне хушшинче çуркуннехи ĕçсене лайăх иртересчĕ, тырпул, пахча-çимĕç лайăххрах, нумайтарах туса илесчĕ тесе—тĕрлĕ йăласем шутласа кăларнă. Ак мĕнле йăласем пулнă авалхи славйансен: çуркуннехи ĕçсем пуçланас умĕн ваттисене асăнасси, çав ваттисене асăнсан вĕсен „чунĕсем“ çуркуннехи ĕçсене лайăххрах иртерме пулăшĕç тесе шухăшланă, çавăнпа масарсем çине кайса çуллă икерчĕсем пăраха-пăраха хăварнă. Вăл йăла чăвашсем хушшинче те пулнă, хальхи вăхăтра та ваттисене асăнас йăла пĕтĕмпех пĕтмен-ха.

Тата славйан халăхсем „усал“ сывлăшран сыхланас тесе, пустуй вырта çÿрекен ăпăр-тапăрсене пухса уламăпа пĕрле, уçăрах çĕре тухса, çунтарса йанă, çав çут-кăвар хĕмĕпе, тĕтĕм шăршипе йал хушшинчен „усал“ сывлăш тухса тарать,—тесе шухăшланă. Тĕрлĕ çунакан йапаласенчен етем кĕлеткисем туса çунтарни те пулнă.

Лашасем кÿлсе пысăк шанкăравсем, пĕчĕк чăмăр тонкăрсем çакса чупас йăла ку тăранчченех пырать, авалхи славйан халăхсем çав шăнкравсене çакса йантратнипе шăнкăрав сассинчен „усал“ сывлăшсем хăраса тараççĕ,—тесе шухăшланă.

Тури чăвашсем (Тутаркас, Йетĕрне, Шупашкар районĕсем) ĕлĕкхи вăхăтра обйазателнă шăнкăравсем çакса лашасемпе чупса çÿреччĕç. Тата йашсем-хĕрсем, ача-пăчасем тусем çинче йăрăннă чух: „кантăр вăрăм пултăр!“ тесе кăшкăрса йăрăнса аначчĕç. Çав „кантăр вăрăм пултăр“ тени вăл чăвашсен авалхи йăли пулнă.

Чăвашсем 1552 çулччен йазычниксем пулнă. Чăваш халăхĕ те славйан халăхĕсем пекех çуркунне çитес умĕн çăварни уйавне иртернĕ. „Çăварни“ тени—тепĕр тĕрлĕ каласан, „çу ерни“ тенине пĕлтерет, „çу ернине“ авалхи чăвашсем çуркуннехи ĕçсем ÿсĕмлĕ пулччăр, тесе иртернĕ. Çапла ĕнтĕ çăварни вăл калама çук кивĕ, ĕçхалăхĕшĕн сийенлĕ йапала. Çав çăварни социалисăмла хуçалăха питĕ пысăк сăтăр тăвать. Хăшпĕр кивĕ йăларан уйăрăлман çынсем ĕçсе ÿсĕрĕлсе, харкашса çÿреççĕ, хĕнешеççĕ, суранланаççĕ. Çăварни вăхăтĕнче çавăн пек ирсĕр ĕçсем туни ĕлĕк капиталиссене, помещиксене питĕ усăллă пулнă. Çав експлоататорсем патша власĕпе чиркÿве пĕрлештерсе мĕн пур ĕçхалăхне тĕттĕмре усранă. Çав çăварни йăли христиансен тĕнĕпе авал çыхăнман пулсан та, експлоаторсем, пупсем ăна чиркÿпе çыхăнтарнă, авалхи йазычниксен йăлине—çăварнийе „аслă типĕ“ (великий пост) умĕн пулакан „православнăй“ праçник шутне хурса, улпутсен, капиталиссен власне çирĕплетес майпа халăх хушшине сарсах, çирĕплетсе пынă. Ĕçхалăхне ĕмĕр тĕттĕмре усрама ĕмĕтленнĕ помещиксемшĕн, капиталиссемшĕн, пупсемшĕн çăварни усăлă пулнă, ĕçхалăхне çăварни сийен кăна кÿрет.

Октябĕрти аслă революци тĕн сĕрĕмне çапса салатрĕ, социалисăм строителстви мĕлйун ĕçхалăхне тĕн сĕрĕмĕнчен хăтарчĕ. Анчах кивĕ йăла ĕçхалăх хушшинче пĕтĕмпех пĕтмен-ха.

Колхозсенче, предприйатисенче çăварни сийенлĕхĕ çинчен ăнлантармала. Турăсăрсен ушкăнĕсем, çак ĕçре малти ретре пымала. Çăварнине хирĕç, кив йăлана хирĕç хастарлăн кĕрешмеле.

М. С. Цветков.

„Чăваш коммунĕ“ çырăнса [illegible] хакĕсем: 12 уйăхха—30 т., 6 уйăхха—15 т., 3 уйăхха—7 т. 50 пус, 1 уйăхха—2 т. 50 пус. Кăçăрйĕсене [illegible]

Уполномоченный Чувашглавлита № 97. Гор. Чебоксары. Типография № 1 Чувашполиграфтреста. Заказ № 83. Тираж 15.500 25—II 38 [illegible]